ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 16 ЮНКУН
№ 12 (8664)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Ленин кунĕсем умĕн (1 стр.).
Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Государство заданине иртгерсе пурнăçларăмăр. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Г. Савельев юлташ каласа панинчен (1 стр.).
Промышленность предприятийĕсенче малта пыракансен опытне анлă сарар! М. Филиппова.—Çĕнĕ техникăна лайăх ĕçлеттеретпĕр; **Г. Кулешов.**—Çĕнĕ çентерусем патне; **И. Царегородцев.**—Виçĕ норма; **И. Кондюров.**—Технологи процесне çĕнетсе лайăхлататпăр; **А. Лукина.**—Торф хатĕрлесси вăйланать (2 стр.).
Э. Мурзаев.—Семенов-Тян-Шанский (3 стр.).
ТЕАТР. **П. Карпов.**—«Çамрăк сын» (3 стр.).
Культурăллă пурнăç хроники (3 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ (3—4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Иран правительстви Англие панă нота (4 стр.).
Франципи хĕрарăмсен союзĕн нациллĕ совечĕн сессийĕ (4 стр.).
Н. К. Сверчков ÿкерне картинăсен выставки (4 стр.).
Республикăри шахмат чемпионачĕ (4 стр.).

Социализмлă ăмăртăвăн тĕп задачи

Пĕтĕм халăх хуçалăхне сарăлнă социализмлă ăмăрту государствăн планлă заданийĕсене ăнăçлăн тултарма ĕçсыннисене мобилизацилемелли хăватлă вăй пулса тăрать, вăл коммунизм тумалли меслет. Социализмлă ăмăрту çинчен Ленинпа Сталин вĕрентнисем совет патриочĕсене ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарасçĕ, вĕсем коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн ĕçлеме миллионшар совет çыннисене хăватлă вăй параççĕ.

«Ăмăртура чи чапли вăл çакăнта пулать,—тенĕ Сталин юлташ 1930 çулта,—вăл çынсем ĕç çине пăхассинче тĕпрен улшăну тăвать, мĕншĕн тесен вăл ĕлĕк хисепсĕр тата йывăр çĕклем вырăнне шутланнă ĕçе чыслăх ĕçĕ, мухтав ĕçĕ, чаплăлăхпа паттăрлăх ĕçĕ туса хурать».

Государствăн планлă заданийĕсене ăнăçлă тултарассишĕн пыракан ăмăртура рабочи класăн, колхоз хресченĕсен тата интеллигенцин творчествăллă пуçарулăхĕ, ĕçри хастарлăхĕ, социализмлă ăнланулăхĕ ÿсет. Промышленноçра, строительствăра, транспортра, ялхуçалăхĕнче вăрçă хыççăнхи çулсенче стахановла ĕçĕн çĕнĕ тата та лайăхрах формисемпе меслечĕсем çуралса тухрĕç. Наука работникĕсемпе производство хушшинче творчествăллă туслăх кунтан-кун тĕреклепет. Коллективсем хушшинче малта пыракан бригадăсен, цехсен, предприятисен, колхозсен ятне илессишĕн ăмăрту вăйланса пырать.

Юлашки вăхăтра Мускаври «Буревестник» фабрикăра ĕçлекен М. Левченкопа Г. Муханов стахановецсем, Люблинри тимĕр шăратакан механически заводри А. Жандаровăпа О. Агафонова токарьсем, Горький автозаводĕнчи А. Загорныйпа Ф. Катаев тимĕрçĕсем, Горловкăри комбайн çинче ĕçлекен В. Сугоняко машинист, Бакури буровой мастер Ш. Фаткуллиев, Мускав автозаводĕнчи çамрăк рабочисемпе специалистсем тата производствăра малта пыракан ытти рабочисем пуçарнипе ăмăртăвăн çĕнĕ формисем çуралса тухрĕç, вĕсем пĕтĕм халăх хуçалăхĕшĕн пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Социализмлă ăмăрту пынă май пысăк пахалăхлă продукци кăларассишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн, чĕртаварсене, материалсене, электроэнергие перекетлессишĕн, комплекслă механизацишĕн тата производствăна автоматизацилессишĕн çĕнĕ юхăм сарăлчĕ. Тимĕр-тăмăрсене хăвăрт шăратасси, строительство ĕçĕсене хăвăрт меслетпе тăвасси, çĕр кăмрăк промышленноçĕнче циклсем тăрăх ĕçлесси ĕçе кĕрсе пырать. Нефть скважинисене нумай вăхăта юсавлă тытассишĕн, локомотивсене хăвăрт çÿретессишĕн, вагонсемпе суднăсен çаврăнăшне хăвăртлатассишĕн кĕрешÿ пырать. Ялхуçалăх работникĕсем пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, обществăллă выльăх шутне ÿстерессишĕн, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартассишĕн ăмăртаççĕ.

Пирĕн çĕршывăн халăх хуçалăхĕнче вăрçă хыççăнхи çулсенче пысăк улшăнусем пулчĕç. Çак улшăнусем, чи малтан, промышленноçпа транспорт тата ялхуçалăхĕ çĕнĕ техникăпа пуянланнинче, квалификациллĕ рабочисемпе специалистсен йышĕ чылай ÿснинче палăрать.

Техника ÿсни, кадрсем ÿсни халăх хуçалăхне совет экономики аталанăвĕн чи пысăк задачисене ăнăçлă татса пама пулăшать. Çав вăхăтрах хăшпĕр парти, профсоюз, хуçалăх органĕсем социализмлă ăмăртăва ертсе пырас ĕçре чылай чухне асăннă улшăнусене шута илмеççĕ, ăмăртăва ертсе пырас ĕçре пысăк çитменлĕхсем тăваççĕ.

Хăшпĕр предприятисемпе колхозсенче социализмлă ăмăрту çаплах пуринчен ытла хисеп тĕлĕшĕнчен çитĕнÿ тăвас енĕпе пулса пырать. пахалăхлă кăтартусене пурнăçлассишĕн çителĕклĕ кĕрешмеççĕ. Нумай предприятисем плана продукци пахалăхне шута илмесĕр тултараççĕ, правительство ассортимент тата номенклатура енĕпе панă заданисене тултармаççĕ, чĕртавар, топливо, электроэнерги ытлашши расходлаççĕ, браксемпе тăкаксем нумай тăваççĕ. Çакнашкал сиенлĕ практикăна пĕтермелле.

Партипе правительство çапла кăтартса параççĕ: хальхи вăхăтра **социализмлă ăмăртăвăн тĕп задачи вăл кашни цех, предприяти енĕпе государство планĕсене кăтартса панă номенклатура тата ассортимент енĕпе обязательнăй йĕркепе тултарнипе пĕрлех, çаксемшĕн кĕрешесси пулса тăрать: продукци пахалăхне пур майсемпе те лайăхлатассишĕн тата продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн, чĕртаварсене, материалсене перекетлессишĕн, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче шалти резервисемпе тĕрĕс усă курассишĕн, çĕнĕ техникăпа малта пыракан технологие ĕçе кĕртсе пырассишĕн, ĕç тухăçлăхне тата производство культурине ÿстерессишĕн кĕрешесси пулать.** Çак задачăсене татса парасси социализмлă ăмăртăвăн тĕп задачи пулать.

Социализмлă ăмăртăва организацилес ĕçре халăх хуçалăхĕнче пулнă пахалăхлă пысăк улшăнусене шута илес тата ответлă задачăсем пур. Вĕсенчен нумайăшĕ ăмăртăва организацилес ыйтусене сайра хутра кăна сÿтсе яваççĕ, çак ĕçри пысăк йăнăшсене асăрхамасăр иртеççĕ. Социализмлă обязательствăсем йышăнас тата ăмăрту итогĕсене пăхса тухас ĕçсене чылай предприятисенче кая юлса тата ячĕшĕн, рабочисен пухăвĕсенче сÿтсе явмасăр тăваççĕ. Çавăн пирки те обязательствăсем час-часах предприяти е цех умĕнче тăракан задачăсен çÿллĕшĕнче пулмаççĕ, ĕç тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе халиччен тунă шайран кая юлаççĕ.

Ăмăртăва ертсе пырас тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсен ĕçĕсенче те пысăк çитменлĕхсем пур. Вĕсенчен нумайăшĕ ăмăртăва организацилес ыйтусене сайра хутра кăна сÿтсе яваççĕ, çак ĕçри пысăк йăнăшсене асăрхамасăр иртеççĕ. Социализмлă обязательствăсем йышăнас тата ăмăрту итогĕсене пăхса тухас ĕçсене чылай предприятисенче кая юлса тата ячĕшĕн, рабочисен пухăвĕсенче сÿтсе явмасăр тăваççĕ. Çавăн пирки те обязательствăсем час-часах предприяти е цех умĕнче тăракан задачăсен çÿллĕшĕнче пулмаççĕ, ĕç тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе халиччен тунă шайран кая юлаççĕ.

Парти, профсоюз, комсомол организацийĕсен тата хуçалăх органĕсен социализмлă ăмăртăва ертсе пырассине татăклăн лайăхлатмалла, çак ĕçри формализма пĕтермелле, социализмлă ăмăртăва мĕнпур рабочисене, колхозниксене, специалистсене активлă хутшăнтармалла.

Ăмăртса ĕçлекенсене хăйсен социализмлă обязательствисене куллен пурнăçлама пулăшни кирлĕ, производствăра малта пыракансен опытне куллен-кун çине тăрса анлăн сармалла, социализмлă ăмăртура çуралса пыракан паха пуçарусене пур майсемпе те пулăшса тăмалла, кая юлаканнисене малтисене хуса çитме пулăшмалла.

Социализмлă ăмăрту пирĕн халăх хуçалăхне пысăк çитĕнÿсем тума пулăшрĕ. Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе совет çыннисем çĕнĕ çулта тĕп задачăсене татса парассишĕн ăмăртса ĕçлĕç, совет экономикин мĕнпур отраслисене хăватлăн çĕкленмелле тăвĕç, çакăн тăрăх ĕçсыннисен пурнăçне малалла тата ытларах лайăхлатма май парĕç, коммунизм строительствине вăйлатас тĕлĕшпе пысăк вăя хурса ĕçлĕç.

(«ПРАВДА» хаçатăн январĕн 15-мĕшĕнчи умстатьи).

Ленин кунĕсем умĕн

Пĕтĕм Совет çĕршывĕнче Ленин кунĕсене паллă тума хатĕрленеççĕ.

Çак кунсенче В. И. Ленин музейĕн Тбилиси хулинчи филиалне курма пыракансем уйрăмах нумай. Музей филиалĕн 24 залĕнче 3 пин ытла документ пур. Çав документсем аслă çулпуçăмăрсен В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсене кăтартса параççĕ. Çак кунсенче музея Сталин ячĕпе тăракан пăравуссем юсакан заводри, Киров ячĕпе тăракан станоксем тăвакан заводри рабочисем пырса курнă.

Вильнюс хулинчи промышленность предприятийĕсенче, учрежденисемпе шкулсенче ленинизм идейисем чаплă çĕнтерÿ туни çинчен калаçусем иртгереççĕ, агитаторсем В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн аслă туслăхĕ çинчен каласа параççĕ.

Ворошиловградри Октябрьти революци ячĕпе тăракан пăравуссем тăвакан заводăн Культура çуртĕнче нумай пулмалли кино-лектори уçăлнă. Кунта В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен лекцисем вуласа параççĕ. Лекцисем хыççăн кинокартинăсем кăтартаççĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи агитаторсем 20 пин çын ытла большевиксен партийĕпе Совет государствине туса хунă аслă В. И. Ленин çинчен калаçусем иртгереççĕ. Горький ячĕпе тăракан республикăри библиотекăра выставка уçăлнă, унта В. И. Ленинăн произведенийĕсене чăвашла пичетлесе кăларнă кĕнекесене пухнă. (ТАСС).

В. И. Ленинăн Куйбышеври музей-çуртĕнче

КУЙБЫШЕВ, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Куйбышев хулинчи Рабочи тата Ворошиловски урамсен кĕтесĕнчи икĕ хутлă çурт çинче шурă мрамор хăма курăнса тăрать. Мрамор хăма çине çапла çырса хунă: «Çак çуртра 1889—1893 çулсенче пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн аслă çулпуçĕ В. И. Ленин пурăннă». Ку çуртра—В. И. Ленин музейĕ.

Çак кунсенче музей-çурта çынсем уйрăмах нумай пыраççĕ. Паян кунта халăх ытти кунсенче пулнинчен те нумайрах пулнă. Музея пыракансем çак çурта чĕререн хумханса кĕреççĕ. Музейри экспонатсене интересленсе пăхаççĕ, аслă çулпуçăмăр Çĕпĕрте, Хусанта тата Самарта пурăннă вăхăтра революциллĕ ĕç туса пынипе паллашаççĕ.

Владимир Ильич пурăннă пÿлĕмре курма пыракансем уйрăмах нумай вăхăт тăраççĕ. Кунта Ульяновсен çемйи килте мĕнле пурăннине, ĕçлеме юратакан çынсем пурăннине куратăн. Сĕтел çинче—çырмалли хатĕрсем, кĕнекесем, шутламалли счет. Этажерка çинче—В. И. Ленин вуланă литература.

Музей-çурта пыракан çынсем Ильичăн ĕмĕр-ĕмĕр чĕрĕ сăн-сăпатне чĕре патĕнче тытаççĕ.

Юлашки çулталăк хушшинче В. И. Ленинăн Куйбышеври музей-çуртне экскурсантсен 705 ушкăнĕ пырса курнă.

В. И. Ленин произведенийĕсене казах чĕлхипе пичетлесе кăларнă

АЛМА-АТА, январĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). 1923 çулта пуçласа 1952 çула çитичченхи вăхăтра В. И. Ленин произведенийĕсене казах чĕлхипе 1.796.220 экземпляр пичетлесе кăларнă. В. И. Ленин РКСМ III-мĕш съездĕнче «Çамрăксен союзĕн задачисем» çинчен каланă сăмаха, «Государство тата революци», «Мĕн вăл «халăх тусĕсем» тата вĕсем социал-демократсене хирĕç мĕнле кĕрешеççĕ?», «Народничествăн экономикăллă содержанийĕ тата ăна Г. Струве кĕнекинче критикăлани» ятлă произведенисем темиçе хут та пичетленсе тухнă.

В. И. Ленинăн суйласа илнĕ произведенийĕсене пĕр том, икĕ том,ултă том туса нумай циллĕ тиражпа пичетлесе кăларнă. «Материализм тата эмпириокритицизм» ятлă произведени уйрăм кĕнекепе пичетленсе тухнă.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Маркс—Энгельс—Ленин институчĕн Казахстанри филиалĕ В. И. Ленин сочиненийĕсене казах чĕлхи çине куçарать. 15 том пичетленсе тухнă.

«Чăвашвăрман» трест тата ĕçсыннии депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата иртгерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

13. Канаш районĕнчи **Маленков ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **А. Мухин** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **И. Сотников** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **В. Максимов** юлташ). Колхоз 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне йывăç касса хатĕрлемелли плана 107,6 процент, турттарса кăлармалли плана 113,8 процент тултарнă.

14. Октябрьски районĕнчи **«Звезда» колхоз** (председателĕ **С. Яковлев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Г. Архипов** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **С. Пелеев** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 111,2 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 115,4 процент, турттарса кăлармалли плана 101,8 процент тултарнă.

15. Çĕрпÿ районĕнчи **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. Ефимов** юлташ, йывăç касса хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **А. Кириллов** юлташ, йывăç турттарса кăларакан бригадăн бригадирĕ **Ф. Михайлов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,8 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 101,5 процент, турттарса кăлармалли плана 103 процент тултарнă.

16. Первомайски районĕнчи **«Красная Поляна» колхоз** (председателĕ **П. Степанов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **В. Мулин** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **Ф. Белков** юлташ) Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 103,8 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 111,3 процент, турттарса кăлармалли плана 101,2 процент тултарнă.

Государство заданине иртгерсе пурнăçларăмăр

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Г. Савельев юлташ каласа панинчен

Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем вăрман хатĕрлемелли плана çулсерен срокчен тултараççĕ. Ку сезон планне илсен, эпир йывăç хатĕрлеме 6 бригада, 18 звено организацилерĕмĕр. Бригадăсемпе звеносем хушшинче задание срокчен пурнăçлассишĕн социализмлă ăмăрту сарăлчĕ. Колхозниксем ирхине 5—6 сехетрен тытăнса каçхи 9 сехетчен ĕçлерĕç.

Елена Осеева, Григорий Воробьев, Семен Семенов, Александр Федоров, Василий Федоров, Василий Осеев юлташсем социализмлă ăмăртура паха тĕслĕхсем кăтартрĕç, ĕç нормине куллен 150 процентран кая мар тултарса пычĕç. Раиса Макарова, Петр Иванов, Михаил Русское юлташсем урапа çулĕпе куллен 3—4-шар кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухрĕç. С. Шипеев, А. Пашкиров, Н. Зотов агитаторсем массăллă ĕçе тивĕçлипе туса пычĕç, калаçусем иртгерес, хаçат-журналсенчи çĕнĕ хыпарсене вуласа парас тĕлĕшпе парторганизаци панă поручение лайăх пурнăçларĕç, социализмлă ăмăртăва ертсе пыракансем пулчĕç.

Колхозниксем йывăç касса хатĕрлемелли плана ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне 102 процент тултарчĕç. Стахановла вунăкунлăх вăхăтĕнче вăрманта 60 çын çуран, 30 çын лавпа ĕçлерĕç. Çĕнĕ çула эпир йывăç касмалли плана 107,7 процент, турттармалли плана 121,7 процент тултарнипе кĕтсе илтĕмĕр.

Хĕрлĕ Чутай вăрманпромхоз дирекцийĕ пирĕн ĕçе пысăка хурса хакларĕ, радиоприемник парса премилерĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Ĕçе механизацилемелли план

КРАСНОДАР, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС) Марьянски районти «Память Ильича» ялхуçалăх артелĕнче правлени анлă ларăвĕ пулнă. Ларура колхоз производствине 1952 çулта механизацилемелли план çинчен сÿтсе явнă.

Çак ялхуçалăх артелĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатма мĕнпур резервсемпе усă курассишĕн Кубаньри колхозниксен ăмăртăвне пуçарса янă. Колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисем 10, вĕсенчен 8-шне электрификациленĕ. Çилпе ĕçлекен двигатель лартнă. Выльăх апатне механизмсемпе вĕтетсе хатĕрлемелле тунă. Колхозăн чи пысăк ферминче ĕнесене электричествăпа ĕçлекен аппаратсемпе сăваççĕ.

1952 çулхи план тăрăх ĕçе тата ытларах механизацилеме йышăннă. Ултă фермăра шыв ăшăтма тата сĕте тирпейлеме электричествăпа ĕçлекен аппаратсем лартаççĕ. Колхозниксем парниксене тăпра хурас тата унти ÿсентăрансене шăварас ĕçе механизацилеççĕ. Тырпул пухса кĕртес тата тĕштырăсене итемсем çинче тирпейлес ĕçе, ытти нумай ĕçсене те пĕтĕмпех механизацилесе çитереççĕ. Ĕçе механизациленĕ май кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, ĕçкунĕсем икĕ хут сахалрах расходламалла пулать.

Малтанлăха шутласа хунă тăрăх, колхозăн тупăшĕсем 7—8 миллион тенке çитеççĕ.

Кĕскен

БЕЛОМОРСК (Карело-Финн ССР-ĕ). Пулă тытакан колхозсен бригадисем Шурă тинĕсре сельдь нумай тытаççĕ. Кемь тата Беломорск районĕсенчи пулăçсем çĕнĕ çул пуçланнăранпа 15 пин пăт сельдь тытса панă. Вĕсем çур уйăхри задание тултарнă. Государство организацийĕсен пулă тытакан бригадисем январьти плана тултарнă. (ТАСС).

Сталино облаçĕ. Константиновкăри Фрунзе ячĕпе тăракан металлурги завочĕн коллективĕ производство планне ăнăçлă тултарса пырать, чĕртавар, топливо тата материалсем нумай перекетлет.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: сулахайран сылтăмалла—Совет Союзĕнчи чи лайăх сталевар И. И. Колпаков тата ăна пулăшакан Н. Бут мартен кăмакинче хурçă мĕнле шăраннине пăхаççĕ.

И. БОНДАРЕНКО фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

500 спектакль

ДНЕПРОПЕТРОВСК, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Нижнеднепровскри Киров ячĕпе тăракан вагонсем юсакан заводри драма коллективĕ çĕнĕ спектакль—Сталинла премии лауреачĕ Н. Дьяконов çырнă «Парнеллĕ туй» комедие лартса панă.

Ку вăл—коллектив лартнă 500-мĕш спектакль. 30 çул хушшинче драма коллективĕ вырăс клас икĕсемпе Украинăри классиксен пьесисене, çавăн пекех совет драматургĕсен пьесисене вуншар лартса панă. А. Н. Островскипе А. П. Чеховăн пьесисене нумай лартнă.

Хулари чи вата художество коллективĕнче заводри рабочисем 50 çынна яхăн тăраççĕ. Коллектив членĕ В. Колесник инженер 100 роль ытла вылянă.

Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнĕ тĕле драма коллективĕ вырăссен аслă писателĕн «Ревизор» ятлă комедине лартса пама хатĕрленет.

Агрегатсене срокчен туса кăлараççĕ

ТАЛЛИН, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Таллинри машинăсем тăвакан завод коллективĕ нефть промышленноçĕ валли икĕ пысăк агрегат срокчен пĕр эрне малтан туса пĕтерет. Ку вăл—завод çĕнĕ çулта туса кăларнă пĕрремĕш продукци.

Завод 1952 çулта туса кăларакан пĕтĕм продукци шутĕнче çĕнĕ йышши продукци çурри чухлĕ пулать. Халĕ центробежнăй насуссем тума хатĕрленеççĕ. Çавăн пекех нефть промышленноçĕ валли ытти оборудовани те тума хатĕрленсе пыраççĕ.

Механически цехри рабочисем Э. Сестверк, В. Грюнберг тата слесарьсен Ю. Страндберг ертсе пыракан бригади, инженерсемпе пĕрле ĕçлесе, станоксене лайăхрах ĕçлеттермелли хатĕрсем тунă. Çапла вара, детальсене заводра 3—5 хут хăвăртрах тума май килет.

Предприяти коллективĕ январь уйăхĕнче графикран иртгерсе ĕçлесе пырать.

Выльăхсене—симĕс курăк

ОДЕССА, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Березовски районти партин XVIII-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозри выльăх апачĕ туса хатĕрлекен бригада, выльăх-чĕрлĕх пăхакансемпе пĕрле, выльăхсене валли курăк ытларах акса ÿстермелли план хатĕрленĕ.

План тăрăх, апрель уйăхĕн иккĕмĕш пайĕнчен пуçласа октябрь уйăхне çитиччен фермăсенчи выльăхсене симĕс курăкпа тăрантарса усрама палăртса хунă. Çуллахи вăхăтра сĕтеклĕ апатсем 16 пин тонна ытла пухса илме палăртнă.

Одесса облаçĕнчи колхозсенчи выльăх апачĕ хатĕрлекен 500 бригада ытла выльăхсене çуллахи вăхăтра çулса çитерме курăксем акма хатĕрленеççĕ.

Промышленность предприятийĕсенче малта пыракансен опытне анлă сарар!

Çĕнĕ техникăна лайăх ĕçлеттеретпĕр

Уральски автозаводри Нина Назарова зуборезчица паха пуçару турĕ—вăл хăйĕн станокне лайăх пăхса усрама социализмлă обязательство илчĕ. Унăн пуçаруне эпĕ заводра чи малтан йышăнтăм, станок çинчен пĕр хут çеç вăрăмлатма сăмах патăм.

Эпĕ станока яланах лайăх пăхса усратăп, унăн çиллĕненнĕ пайĕсене çу тăтăш сĕрĕтĕп, мĕнле те пулсан тимлĕ çăнатăп. Вăхăта хаклассн—маншăн çирĕп закон пулса тăчĕ. Пысăк пайăн юсав ĕçĕсене эпĕ хамах тăватăп, пите кирлĕ чухне кăна дежурнăй слесарьтен пулăшу ыйтатăп. Лайăх сĕрнĕ, тимлĕ пăхса тухнă станок пĕр кăлткăсăр ĕçлет, ку вăл вăхăта перекетлеме пулăшать.

Кăткăс детальсене туса хатĕрленĕ чухне эпĕ вĕсене икĕ-виçĕ хут, ытлашши кăткăсах мар детальсене пĕр хут çеç висçе пăхатăп.

Оборудованипе тĕрĕс те лайăх усă курасси тĕрлĕ инструментсемпе ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ пулнинчен те килет.

Ĕçленĕ чухне пуçра нумай ырă шухăшсем çуралаççĕ, тĕрлĕ меслетсемпе усă курма тивет. Вĕсене пурнăçлама чылай вакă инструментсем кирлĕ. Манăн хам туса хатĕрленĕ инструментсем питĕ нумай пухăнчĕç. Анчах хăшпĕр чухне вĕсене шыраса хаклă вăхăт сая каять. Эпĕ вакă детальсем вырăнне темиçе пысăкрах детальсем туса хатĕрлеме сĕнÿ патăм. Кун пек детальсемпе усă курни вăхăта нумай перекетлеме пулăшать.

Станок çинче эпĕ детальсене хăвăрт туса хатĕрлеме вĕрентĕм. Пытармастăп, ку часах пулмарĕ. Кашни çĕнĕ ĕçри пекех, манăн чылай йывăрлăхсемпе тĕл пулма тиврĕ. Анчах кашниччех чăрмавсене ăнăçлă çĕнтерне. Эпĕ ĕçе мĕнле çăмăллатмалли çинчен нумай шухăшланă. Юлашкинчен, диаметрĕпе 285 миллиметрлă, 1,25 миллиметрлă шăл хушиллĕ пăчкă туса хатĕрлерĕм. Çав пăчкă пуринчен те лайăх пулчĕ. Пăчкă шăлĕсене тата 5 градус чалăшлатрăмăр. Ку вăл хăйĕн результатне пачĕ, ĕç тухăçлăхне нумай ÿстерчĕ. Материала каснă чухне пăчкă çăмăллăн шăвать, вăл ĕлĕкхинчен ытларах вăхăт ĕçлет.

Пăчкăна станок çине вырнаçтариччен шăлĕсене лайăх хăйратăп. Ку ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерет.

Ĕç ăнăçлăхĕ пăчкăн хăвăртлăхне ÿстернипе кăна пĕтмерĕ. Станока ĕçлеттерме ĕлĕкхинчен хăватлăрах мотор лартса пачĕç. Мотора улăштарнă хыççăн пăчкă пĕр минут хушшинче 2 пин хута яхăн çаврăнма пуçларĕ.

Пăчкă хăвăртлăхне ÿстернĕ хыççăн станок сĕтелĕ çинче пăчкă валли материал парса тăракан ишнĕ планкăсене çирĕплетес задача тухса тăчĕ. Ку вăл хăтпле тĕрĕс тунă сĕрте питĕ кирлĕ. Ку ыйтăва та ăнăçлă татса патăмăр. Ĕлĕк усă курнă уйрăм тикĕс планкăсем вырăнне линейка вĕçне лартнă шăлнĕ крепление усă курма тытăнтăмăр.

Детальсене тунă чухне вăхăта перекетлени, пĕчĕкнĕ улăштарни, детальсене вĕçсе пăхни маншăн ĕçри пысăк резерв пулса тăчĕ. Унпа пĕлсе усă курнине пула эпĕ машинăн ĕç хăвăртлăхне 3,5 процент чухлĕ ÿстертĕм.

Станокпа ĕçленипе пĕрлех эпĕ детальсем пысăк пахалăхлă пулччăр тесе те хытă тăрăшатăп. Кун пек ĕçлесен кăна стахановецăн хисеплĕ ятне сыхласа усрама пулать. Продукци пахалăхĕ пысăк пулни ĕç вырăнĕнчи тасалăхпа тирпейлĕхрен сахал мар килет. Станока лайăх пăхса усрани те—ĕç тухăçлăхне, продукци пахалăхне лайăхлатмалли майсенчен пĕри.

Ĕç вырăнне малтанах хатĕрлесе хунин пĕлтерĕшĕ пысăк. Эпĕ задание каçхинех илетĕп, ирхине ĕçлеме мĕн кирлине хатĕрлесе хуратăп. Унсăр пуçне ĕç пуçланиччен 30—40 минут малтан килетĕп, ун чухне станока тепĕр хут пăхса тухатăп.

Иртнĕ çулхи 11 уйăх хушшинче 25 уйăхри задание тултартăм. Продукци пахалăхĕ лайăх.

Хамăн ĕçри опытпа эпĕ юлташсене паллаштаратăп. Вĕсене пулăшасси—манăн чыслă тивĕç. Манăн патăмра вĕреннĕ станочницăсем хăйсен ĕç нормине 120 процентран пуçласа 150 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Ева Колпакова вара 200 процент чухлĕ тултарать.

Заводри стахановецсем тунă ĕçсене пурне те сăмахпа çырса кăтартма çук. Çитменлĕхсем те çук мар-ха. Материалсем парса тăрассине лайăхлатсан тата 40—45 минут вăхăт перекетлеме пулать.

Çавсене шута илсе, эпĕ кăçал продукци туса кăларассине тата ытларах ÿстерме обязательство илтĕм. Панă сăмаха чыслă пурнăçлăп.

М. ФИЛИППОВА,
Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ, Куславккари çуртсем тăвакан заводри станочница.

Висĕ норма

Эпĕ чылайччен лучковăй пăчкăпа йывăç касса хатĕрлерĕм. 1949 çулта вăрманпромхоза куçса çÿрекен электростанцисемпе электропăчкăсем кÿрсе килчĕç. Йывăç хатĕрлемелли çĕнĕ техника мана хытă интереслентерчĕ. Эпĕ электропăчкăпа ĕçлеме вĕренес тĕллев лартрăм, дирекципе общественлă организацисем ман шухăша кăмăла ырларĕç.

Социализмлă промышленность вăрманпромхозсене хăватлă техникăпа хĕçпăшаллантарать. Электричествăпа тата мотор вăйĕпе усă курни ĕçе нумай çăмăллатать, ĕç тухăçлăхне ÿстерет. Пуян техникăпа лайăх усă курасси—пирĕн, вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен тивĕçĕ.

Малтанхи вăхăтра ĕçре çитменлĕхсем сахал мар пулчĕç: пăчкă моторĕ час-часах хĕретчĕ, звено членĕсем пурте пĕр пек тухăçлă ĕçлейместчĕç. пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çÿресе вăхăт нумай сая каятчĕ. Çав çитменлĕхсене пĕтерес тесе эпир Кривцовпа Готчиев юлташсен опычĕпе меслетне, электропăчкăна ĕçлеттермелли техникăллă йĕркесене тĕплĕ вĕренме тытăнтăмăр. Электропăчкă ĕмĕрне тăсас, ăна тухăçлăрах ĕçлеттерес тесе эпĕ ăна лайăх пăхса усрама социализмлă обязательство илтĕм. Звено членĕсем ĕçе хăвăрт хăнăхса, электропăчкăна таттисыппиcĕр ĕçлеттерме вĕренсе çитрĕç.

1950 çулхи задание звено 136 процент тултарчĕ. Ку вăл—пирĕн ĕçри малтанхи çĕнтерÿ пулчĕ. 1951 çул пуçламăшĕнче эпир, ПЭС 12—200 электростанци вăйĕпе ĕçлекенсем, çулталăкра 20 пин кубометр, эпĕ ертсе пыракан звено пĕр электропăчкăпа 5 пин кубометр йывăç касса хатĕрлеме социализмлă обязательство йышăнчĕ. Панă сăмаха чыслă пурнăçлассишĕн звеносем, рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту анлă сарăлчĕ.

Малтанхи вăхăтра 25-шер метр сарлакăш вăрман уйăра-уйăра илсе ĕçлеттĕмĕр. Çĕршыври паллă стахановец Н. Кривцов юлташ 10—12 метр сарлакăш тăрăхсем уйăрса илсе ĕçленине пĕлсен, эпир те ун пек тума тытăнтăмăр. Ансăр тăрăхсем çинче ĕçлесен йывăççене касса йăвантарма, сыпăлама тата туратсене иртсе çунтарма та çăмăлрах. 25-шер метр сарлакăшлĕ тăрăхсем уйăрса ĕçленĕ чухне йывăççем пĕр-пĕрин çине ÿксе купаланатчĕç. вĕсене касса сыпăлама кансĕрччĕ.

1951 çулта вăрманпромхоз электропăчкăсемпе йывăç касса хатĕрлемелли плана 143 процент тултарчĕ. Висĕ электростанци хăвачĕпе пурĕ 60 пин кубометр ытла йывăç касса хатĕрленĕ. Н. Кисельков механик ертсе пыракан электростанци коллективĕ 13,3 пин кубометр вырăнне 24 пин кубометр, эпĕ ертсе пыракан звено 1.770 кубометр вырăнне 5.300 кубометр йывăç касса хатĕрлерĕ. Ман звено çулталăкри задание 300 процент ытла тултарчĕ. Звенори рабочисем çулталăкра 15—16-шар пин тенкĕ ĕçлесе илчĕç, эпĕ—20 пин тенке яхăн илтĕм.

Электростанци коллективĕ 1952 çулта 25 пин кубометр, вăл шутра эпĕ ертсе пыракан звено 6 пин кубометртан кая мар йывăç касса хатĕрлеме социализмлă обязательство йышăнчĕ. Панă сăмаха чыслă пурнăçлассишĕн звеносем, рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту çĕнĕ хăватпа саралса кайрĕ.

И. ЦАРЕГОРОДЦЕВ,
Буински вăрманпромхозĕнчи электропăчкăпа йывăç касса хатĕрлекен моторист.

Технологи процесне çĕнетсе лайăхлататпăр

Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕн V-мĕш цех ĕççыннисем валли тумтир хумалли шкаф тата Мускаври университетăн хими факультечĕ валли сĕтелсем туса хатĕрлет. Совет çыннисен пурнăçĕ тăтăш лайăхланса пырать, культури ÿсет. Вĕсем илемлĕ, паха тата йÿнĕ сĕтел-пукан ыйтаççĕ. Вĕсен ыйтăвĕсене пур енчен те тивĕçтересси—хисеплĕ те ответлă ĕç. Çакна асра тытса, цехри кашни рабочи, мастер производство культурине ÿстерессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, унăн хăйне ларакан хакне чакарассишĕн, çĕнĕрен те çĕнĕ, илемлĕ шкафсем ытларах туса кăларассишĕн чĕререн тăрăшса ĕçлет.

Цех 1951 çулхи плана срокчен тултарчĕ. Вăл планран ирттерсе тумтир хумалли 2.300 шкаф туса кăларчĕ. Цехра тĕп фондсемпе туллин усă курассишĕн, оборудование тухăçлăрах ĕçлеттерессишĕн вăйлă ăмăрту пырать. Ăмăрту пире производство талкăшĕн кашни тăваткал метр пуçне, 1950 çулхипе танлаштарсан, 50 процент ытларах продукци туса кăларма май пачĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем пĕрмай технологи процесне çĕнетсе лайăхлатассишĕн кĕрешеççĕ. Ăна рационализаторла сĕнÿсем нумай панинчен лайăх курма пулать. Пĕлтĕр пурĕ 30 ытла рационализаторла сĕнÿ пăхса тухрăмăр. Çав сĕнÿсене пурнăça кĕртни çулталăкра çур миллион тенке яхăн перекетлĕх тума май парать. Рационализаторла сĕнÿсем цеха ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерме, шкаф пахалăхне лайăхлатма пулăшрĕç. Цехра 408 рабочи сдельно ĕçлет. Вĕсенчен 236 стахановец, 172 ударник. Нумай рабочисем ик-виç çулхи ĕç нормине тултарчĕç. 16 бригада пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан бригада ятне илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешеççĕ. В. Спиринпа М. Атрохов юлташсем сĕтел-пукан тăвакан рабочисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче малти вырăна тухрĕç.

Нумай рабочисем, Мухановпа Левченкăран пример илсе, продукцин хăйне ларакан хакне кашни операци тăрăх чакарассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Çак ăмăрту пуçланнăранпа шкафăн хăйне ларакан хакĕ чылай чакрĕ. Цех коллективĕ çĕршыври ытти паллă стахановецсен опычĕпе те анлă усă курма тăрăшать.

Рабочисен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхĕ иксĕлми хăватпа вăйланса пырасси массăллă-агитациллĕ ĕçе çулĕ пусăмра туса пынинчен килет. Цехри партипе профсоюз организацийĕсем массăллă-агитациллĕ тата культурăллă ĕçе пур майсемпе те вăйлатма тăрăшаççĕ.

Коллектива хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене чыслă пурнăçлама мобилизацилес тĕлĕшпе «Мебельщик» стена хаçачĕ пысăк вырăн йышăннине палăртас пулать. Вăл социализмлă ăмăрту мĕнле пынине тăтăш çутатать, ĕçри çитменлĕхсене большевикла хăюлăхпа критикăлать, малта пыракан опыта сарма пулăшать.

Массăллă-политикăллă ĕçе эпир оборудованипе лайăхрах усă курас, кашни рабочие йышăннă обязательствăна пурнăçлама паха майсем туса парас, пур задачисене те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пырас задачăсемпе çыхăнтарса туса пыратпăр. Кашни рабочи хаçат çыранса илет, кĕнекесемпе журналсем тăтăш вулать. Рабочисен политикăллă тата техникăллă пĕлĕвĕ кунтан-кун ÿссе пырать.

Цехра çитменлĕхсем те сахал мар. Эпир хамăрăн резервсемпе тата мĕнпур майсемпе кирлĕ пек усă кураймастпăрха, хăшпĕр йывăр операцисене механизацилемен. Асăннă çитменлĕхсене пĕтерни, коллективăн творчествăллă активлăхне пĕрмай ÿстерсе пыни пире малашне тата пысăкрах çĕнтерÿсем тума пулăшĕ.

Çак уйăхăн малтанхи вунăкунлăхĕнче цех коллективĕ задание ăнăçлă тултарчĕ. Стахановецсем пуçарнипе эпир ĕççыннисем валли çĕнĕ йышши—çаврака сĕтел туса кăларма тытăнтăмăр. Кăçал цехăн пĕлтĕрхинчен чылай ытларах продукци туса кăлармалла. Коллектив пысăклатнă плана та чыслă тултарĕ.

И. КОНДЮРОВ,
Çĕмĕрле комбиначĕн V-мĕш цех начальникĕ.



Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ĕçлекен работницăсем нумайăшĕ 1951 çулхи ĕç нормине ирттерсе тултарнă, продукци пахалăхне лайăхлатнă, чĕртавар перекетленĕ. Фабрика коллективĕ 1952 çулхи плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн, оборудованипе тата шалти резервсемпе туллин усă курассишĕн кĕрешет.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Т. Н. Пирогова ткачиха. Норма тăрăх висĕ станокпа ĕçлемелле пулсан, вăл ултă станокпа ĕçлет. 1951 çулта ĕç нормине 206 процент тултарнă, заданирен ирттерсе 28,5 пин метр пир-авăр тĕртсе кăларнă.

В. АЛЕКСЕЕВ фотоÿкерчĕкĕ.

Торф хатĕрлесси вăйланать

Атăл леш енчи торфопредприяти коллективĕ 1951 çулта халиччен пулман хастарлăхпа ĕçлерĕ. Сезон пуçламăшĕнче Шупашкар хула Совет депутачĕ А. Сироткина юлташ ертсе пыракан бригадăпа эпĕ ертсе пыракан бригада членĕсем плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн, пуян техникăпа лайăх усă курассишĕн социализмлă ăмăрту пуçартăмăр.

Чылай бригадăсем планран ирттерсе пиншер тонна торф хатĕрлерĕç. Торфопредприяти пĕтĕмĕшпе сезонти планран ирттерсе 27 пин тонна торф кăларса типĕтрĕ. Çакăн чухлĕ торф Атăл леш енчи электростанцие 4 уйăха çитет.

Иртнĕ çул маншăн уйрăмах паллă çул пулчĕ. Мана, рядовой работницăна, суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйларĕç, государствăллă пысăк ĕç туса пыма шанчĕç. Эпĕ çав шанăça тÿрре кăларассишĕн, предприятие малалла аталантарассишĕн чĕререн тăрăшса ĕçлетĕп.

Пирĕн предприятире çĕршер хĕр ĕçлет. Вĕсем кăткăс оборудованипе ĕçлеме хăнăхса çитрĕç. Иртнĕ сезонта ĕçленĕ колхозниксенчен нумайăшĕ кăçал та килме договор турĕç.

1952 çулта предприяти коллективĕ умĕнче çĕнĕ те ответлă задачăсем тăраççĕ. Хулари предприятисене электроэнерги нумай кирлине шута илсе Атăл леш енчи электростанцине пысăк программа çирĕплетсе панă. Çавна май пирĕн предприятие кăçал пĕлтĕрхи планран 60 процент пысăкрах задани панă. Çав ответлă задание чыслă пурнăçлас тесен сезона тĕплĕ хатĕрленни кирлĕ.

Халĕ 50 гектар шурлăхра торф кăларма хатĕрленетпĕр: тункатасене кăклатпăр, канавсем чаватпăр, торф типĕтмелли вырăна якататпăр. Çак ĕçсене тума çăмăл мар, апла пулин те рабочисем ĕç нормине ăнăçлă тултарса пыраççĕ.

Оборудование юсас ĕçе те аван йĕркеленĕ. Иртнĕ сезонта торф кăларакан чылай машинăсем локомобиль вăйĕпе ĕçлерĕç. Кăçал вĕсене электрификацилеме палăртнă. Машинăсене электростанци вăйĕпе ĕçлеттерни топливо чылай перекетлеме, ĕç тухăçлăхне ÿстерме май парать. Пирĕн çĕнĕрен икĕ багерлă машина вырнаçтарса лартмалла. Çапла вара çитес сезонта 13 багерлă, 1 элеваторлă машина ĕçлемелле.

Халăх хуçалăхне топливо нумай кирлине шута илсе, кăçал «Завдовское» шурлăха торф кăларма хатĕрлеме тытăнатпăр. Шурлăхри йывăççене касса тункатасене кăклама, канавсем чавма тата ытти ĕçсем тума государство укçа-тенкĕ чылай уйăрса парать. 1953 çулта икĕ шурлăхра 130 пин тонна таран торф хатĕрлеме палăртнă.

Пирĕн коллектив, парторганизаци ертсе пынипе, хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене чыслă пурнăçласа пырĕ.

А. ЛУКИНА,
Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ, Атăл леш енчи торфопредприятири бригадир.

Çамрăксене вĕрентетпĕр

Эпĕ иртнĕ çулхи ĕç нормине икĕ хут ирттерсе тултартăм.

— Мĕнле майпа хăвăрт ĕçлетĕр тата лайăх продукци кăна туса кăларатăр? — час-часах ыйтаççĕ манран юлташсем.

Нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Юратнă специальноçа эпĕ тимлĕ вĕреннĕ. Пур ĕçе те тĕплĕ тума тăрăшатăп. Станокпа инструментсене лайăх пăхса усратăп, ĕç вырăнне тирпейлĕ тытатăп. Ĕçре кашни минутпа туллн усă куратăп. Ĕç хăвăртлăхне ÿстерме, тухăçлă ĕçлеме мана Тăван çĕршыври коммунизмăн аслă стройкисем, телейлĕ те мирлĕ пурнăç, юратнă çулпуçпа учителĕмĕр аслă Сталин сăнарĕ хавхалантарса пыраççĕ.

Вуншар çамрăка токарь специальноçне вĕрентсе хатĕрлерĕм. Юнашар станок çинче ĕçлекен Федорова токарь—манăн ученица. Халĕ вăл хăй çамрăксене вĕрентме пултарать, ĕç нормине 150—200-шер процент тултарса пырать.

Манăн хальхи ученик Юрий Шумалкин кĕске вăхăтрах станок çинче хăй тĕллĕн ĕçлеме вĕренсе çитрĕ. Çамрăксене вĕрентни—пархатарлă ĕç.

1951 çул маншăн асран кайми паллă çул пулчĕ. РСФСР Автотранспорт промышленность министерстви мана «Отличник автомобильного транспорта РСФСР» значокпа наградăларĕ. Награда çине ответлесе 1952 çулта тата тухăçлăрах ĕçлеме, хамăрăн опытпа ыттисене паллаштарма, продукци пахалăхне лайăхлатма пулатăп.

И ГАВРИЛОВА,
Çĕрпÿри автомашинăсем юсакан заводри токарь.

Çĕнĕ çĕнтерÿсем патне

Шупашкарти пир-авăр фабрики коллективĕшĕн 1951 çул нихçан та асран каймн çул пулчĕ.

Фабрика тĕртсе кăларакан пир-авăр ĕççыннисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерме каять. Çакна ялан асра тытса, кашни рабочи, инженерпа техник тата служащи продукци ытларах туса кăларассишĕн, унăн пахалăхне лайăхлатассишĕн, хăйне ларакан хакне чакарассишĕн тимлĕ кĕрешет.

Фабрика çулталăкри планран ирттерсе 446 пин метр пир-авăр тĕртсе кăларчĕ, 85.300 килограмм çип арларĕ. Планран ирттерсе арланă çипрен 850 пин метр пир-авăр тĕртсе кăларма пулать.

Пирĕн фабрика планран ирттерсе туса кăларнă продукцирен 200—250 пин çын валли пĕр мăшăр çипуç çĕлеме пулать. Пĕтĕм фабрика коллективĕ ăмăртса ĕçлет. Цех, участок, бригада коллективĕсем пĕрпĕрипе ăмăртаççĕ, кашни рабочи тенĕ пек социализмлă обязательство йышăннă. Социализмлă ăмăрту çĕнĕ формăсемпе тата содержанипе пуянланса пырать. Рабочисене ĕç нормине тултарни е ирттерсе тултарни çеç çырлахтармасть, халĕ вĕсем уйрăмах пахалăх кăтартăвĕсене лайăхлатассишĕн тимлĕ кĕрешеççĕ.

Çĕр мамăкне «шур ылтăн» теççĕ. Пиншер километртан кÿрсе килекен паха чĕртаварăн кашни грамне перекетлесси—рабочисен йăлине кĕнĕ. Пĕлтĕрхи 11 уйăхра фабрика 20 центнер çĕр мамăкĕ, 10 центнер çип перекетлерĕ.

Фабрика ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана ăнăçлă тултарчĕ. 1951 çулхи ноябрь уйăхĕнченпе фабрикăра ĕç нормине тултарман рабочи çук. В. Григорьева, Т. Алексеева, А. Рожкова пир тĕртекенсем çулталăкри ĕç нормине 187—194 процент, А. Николаевăпа Т. Пирогова юлташсем вара 200 процент ытла тултарчĕç.

Вуншар бригада пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан бригада ятне илме тивĕçлĕ пулассишĕн ăмăртать. План тăрăх пĕрремĕш сорт пир-авăр 97 процент тĕртсе кăлармалла пулсан, А. Рожкова юлташ ертсе пыракан бригада пĕрремĕш сорт продукци 99,1 процент, Т. Алексеева юлташ ертсе пыракан бригада 99,2 процент, Т. Пирогова юлташ ертсе пыракан бригада—99,3 процент туса кăларнă.

Коллектив пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ ÿссе пынине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Кашни йĕке 28 тенкĕ тăрать. Вăл кукăрălсан ĕçе юрăхсăр пулать. Иртнĕ çулсенче фабрикăра кукăрălнă йĕкене нумай нăрахăçа кăларнă. Çип арлакан оборудование юсакан бригадăн бригадирĕ Фомичев юлташ Файфер токарьпе пĕрле йĕке тÿрлетмелли станок туса хатĕрлерĕç. Çав станок çулталăкра 29 пин тенкĕлĕх йĕке перекетлеме май парать.

Файфер токарь электричество вăйĕпе ĕçлекен пресс турĕ. Ку станокпа усă курни рабочисен ĕç тухăçлăхне 30—40 процент таран ÿстерчĕ. Çавăн пек паха рационализаторла сĕнÿсене ытти рабочисем те параççĕ. 1951 çулта фабрикăн производство корпусĕсем тата оборудованийĕ нимĕн чухлĕ те улшăнман, вăл унччен тĕп фондсемпех ĕçленĕ, рабочисемпе служащисен хисепĕ те ÿсмен. Рабочисем, инженерсемпе техниксем, пуян техникăпа, резервсемпе лайăх усă курассишĕн ăмăртса ĕçлесе, оборудование лайăх пăхса усрама социализмлă обязательство илсе, станоксен ĕç хăвăртлăхне тата тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Шалти резервсемпе лайăхрах усă курса, фабрика 1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 2,3 миллион метр ытларах пир-авăр тĕртсе кăларчĕ, 2.170 центнер çип арласа кăларчĕ. Тăван çĕршыва 4,7 миллион тенкĕлĕх продукци ытларах пачĕ.

Асăннă çитĕнÿсене пирĕн коллектив партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçе лайăх йĕркеленипе турĕ. Социализмлă ăмăртăва коммунистсем пуçарса ертсе пыраççĕ. Вĕсем чи ответлă та йывăр участоксенче ĕçлеççĕ, стахановла ĕçпе, хĕрÿллĕ сăмахпа пĕтĕм коллектива хавхалантарса пыраççĕ. Малта пыракансен опычĕпе меслетне сарас тĕлĕшпе те коммунистсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кашни сменăра, бригадăра агитаторсем пур. Вĕсем рабочисене социализмлă ăмăрту мĕнле пынипе тăтăш паллаштараççĕ, калаçусем ирттереççĕ, ĕçре тĕл пулакан йывăрлăхсене большевикла хăюлăхпа пĕтерсе пыма пулăшаççĕ. Фабрикăра наглядлăй агитацие лайăх йĕркеленĕ. Цехсенче, участоксенче кăтарту хămисем, стахановла технологи карттисем пур. Лозунгсемпе плакатсем рабочисене ĕç тухăçлăхне ÿстерме, перекетлĕх режимне çирĕплетме, малта пыракансен опытне сарма чĕнеççĕ.

Дирекци, партбюро тата фабком рабочисене воспитани парассине, вĕсен ăсталăхĕпе тавракурăмне ÿстерессине пысăка хурса хакласçĕ. Политикăллă тата техникăллă пĕлÿсене ÿстерме фабрикăра пур майсене те тунă. Пĕлтĕр пир-авăр тĕртекен рабочисен ăсталăхне ÿстерме ятарласа курс организацилерĕмĕр. Çав курсран 55 çын вĕренсе тухрĕ. Вуншар мастерсем хăйсен пĕлĕвĕсене çĕнĕ техникăна вĕренмелли курсра ÿстерчĕç. Стахановецсем çамрăк рабочисене пĕрерĕн вĕрентес ĕç те анлă саралнă. Рабочисен ăсталăхĕпе пултарулăхне ÿстерме уйрăмах стахановла шкулсем нумай пулăшнине палăртас пулать. Висĕ уйăх хушшинче рабочисем стахановецсен опычĕпе тата меслечĕпе хăйсене интереслентерекен техникăллă ыйтусемпе паллашаççĕ. Пĕлтĕр 90 рабочи стахановла шкултан вĕренсе тухрĕ. Халĕ вĕсем пурте ĕç нормине ăнăçлă тултарса пыраççĕ. Чылай мастерсем Мускаври тата ытти хуласенчи курссенче вĕренчĕç.

СССР Çăмăл промышленность министерстви çирĕплетнĕ план тăрăх фабрикăн 1951 çулта 220 çын çĕнĕрен вĕрентсе хатĕрлемелле тата рабочисен квалификацине ÿстермелле пулнă. Чăннипе вара 326 çынна вĕрентнĕ. Икçĕре яхăн çын хăйсен политикăллă пĕлĕвне кружоксенче ÿстерет.

Фабрика коллективĕ, производство планне чыслă тултарса пынă вăхăтрах, государствăн ытти заданийĕсене те ăнăçлă пурнăçлать. Пĕлтĕр фабрика коллективĕ пир-авăр комбиначĕ валли 118 ăста рабочи вĕрентсе хатĕрлерĕ. Халĕ вĕсем комбинатра ĕçлеççĕ, çĕнĕ, кăткăс техникăпа ăнăçлă усă кураççĕ. Халĕ комбинат валли тата 59 çын вĕрентетпĕр. Кадрсем вĕрентес тĕлĕшпе уйрăмах А. Рычкова инженер, В. Горятнева методист, çип арлакан цехри производство заведующийĕ Ф. Пашков юлташсем тăрăшса ĕçленине палăртас пулать. Вĕсем лекцисем вулама тĕплĕ хатĕрленеççĕ, занятисене интереслă ирттереççĕ, теори ыйтăвĕсене ĕçри примерсемпе çыхăнтарса çутатаççĕ.

Нумаях пулмасть министерство фабрикăна Грузи республикинчи Гори хулинчи пир-авăр комбинатне 27 ăста рабочи уйăрса яма задани пачĕ. Ку задание те эпир вăхăтра, туллн кăмăлпа пурнăçларăмăр. Унта кайнă рабочисем пурте тенĕ пек пирĕн коллективра вĕренсе ÿссе çитĕннĕ çынсем. Çĕршыври пысăк комбинатсем валли ăста рабочисем вĕрентсе хатĕрлеме тÿрĕ тивни пирĕн коллектива савăнтарать.

Асăннă ÿсĕмсем фабрикăра çитменлĕхсем çуккине пĕлтермеççĕ. Производствăра усă курман резервсем сахал мар. Кашни бригада малта пыракан бригада пек ĕçлесен фабрика тата ытларах продукци туса кăларнă пулĕччĕ. Хăшпĕр мастерсемпе мастер помощникĕсем оборудование лайăх ĕçлеттерессишĕн, чĕртаварпа лайăх усă курассишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Ĕç дисциплинине пăснă тĕслĕхсем пулкалаççĕ. Уйрăм командирсем экономика ыйтăвĕсемпе çителĕклĕ интересленмеççĕ, перекетлĕх режимне çирĕплетессишĕн тимлĕ кĕрешмеççĕ. Малта пыракан опытпа меслете, наукăпа техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене сарас тата пурнăça кĕртес ĕçре те çитменлĕхсем сахал мар. Эпир критикăпа самокритикăна вăйлатса, рабочисен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне пĕрмай ÿстерсе пырса, хамăрăн резервсемпе мĕнпур майсене çĕнĕ çĕнтерÿсем тума мобилизацилĕпĕр.

1952 çулта коллектив умĕнче тата ответлăрах та пысăкрах задачăсем тăраççĕ. 1951 çулхипе танлаштарсан 15,3 процент ытларах çип арласа кăлармалла, 12,7 процент ытларах пир-авăр тĕртмелле. Продукци пахалăхне лайăхлатмалла, унăн хăйне ларакан хакне чакармалла, çĕр мамăкĕ, топливăпа электроэнерги перекетлемелле. Çав задачăсене чыслă пурнăçлас тесен çип арлакан оборудовани тухăçлăхне 20 процент, пир-авăр тĕртекен станоксен тухăçлăхне 3,5 процент ÿстермелле.

Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенче цехсемпе сменăсенче рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пĕрлехи пухăвĕсем пулса иртрĕç. Çав пухусенче вĕсем производствăна лайăхлатмалли паха сĕнÿсем пачĕç. Сталинла преми лауреачĕсем Мария Рожневăпа Лидия Кононенко юлташсем пуçарнипе Купавинăри çÿхе пустав тĕртекен фабрикăра 1952 çулхи плана ăнăçлă тултарма резервсем тупассишĕн тата çав резервсемпе усă курассишĕн социализмлă ăмăрту анлă саралнă. Çак çĕнĕ патриотла пуçарăва фабрика коллективĕ пысăк кăмăлпа кĕрсе илчĕ. Халĕ бригадăсемпе участоксенче усă курман резервсене палăртаççĕ, ĕç тухăçлăхне малалла ÿстермелли, чĕртаварпа материалсем перекетлемелли, пĕрремĕш сорт продукци ытларах туса кăлармалли майсене палăртаççĕ.

Çак кунсенче коммунистсен пĕрлехи пухăвĕнче кадрсене воспитани парасси тата вĕрентесси çинчен сÿтсе яврăмăр. Коммунистсен пухăвĕ рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене большевикла воспитани парассине, вĕсен ăсталăхне ÿстерессине тата вăйлатма пулăшакан решени йышăнчĕ. Пуху уйрăмах кадрсен экономикăллă пĕлĕвне ÿстерме кирлине палăртрĕ. Çавăн хыççăн дирекципе общественлă организацисем производствăна планласси, ĕçе организацилесси, хуçалăх расчечĕ çинчен вĕренме ятарласа висĕ кружок организацилеме йышăнчĕç. Çав кружоксем паян-ыран ĕçлеме тытăнаççĕ.

Фабрикăра 1952 çулхи плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăрту кунтан-кун вăйланса пырать. Коллектив, 1951 çулта тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе, çĕнĕ ÿсĕмсем тăвать. Пысăклатнă плана фабрика иртнĕ эрнере ăнăçлă тултарчĕ. Пур цехсемпе участоксем тенĕ пек пĕр тикĕс, график тăрăх ĕçлеççĕ.

Пĕлтĕр СССР Çăмăл промышленность министерстви, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсовет пирĕн фабрика коллективĕ лайăх ĕçленине пĕр хут çеç мар палăртрĕç. 1952 çулта фабрикăри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем, парторганизаци ертсе пынипе, çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвĕç. Тăван çĕршыва планран ирттерсе вуншар тонна çип, çĕршер пин метр пир-авăр парĕç, тупăш чылай тăвĕç.

Г. КУЛЕШОВ,
Шупашкарти пир-авăр фабрикин главнăй инженерĕ.

СЕМЕНОВ-ТЯН-ШАНСКИЙ

П. П. Семенов-Тян-Шанский — вырăссен иртнĕ ĕмĕрти пысăк ученăйĕ тата паллă обществăллă деятелĕ. Хăюллă çулçӳревçĕ тата тĕпчевçĕ пулса, вăл Европăри ученăйĕсенчен пуринчен малтан никам çитсе курман Тянь-Шань тăвĕсен çĕршывне тĕпчесе пĕлнĕ.

П. П. Семеновăн наукăри ĕçĕ çав тери нумай енлĕ. Вăл географ та, геолог та, статистик та, ботаник та, зоолог та пулнă. Петр Петрович çак наукăсенче пуринче те пысăк ĕçсем тунă. Анчах вăл чи малтан аслă географ тата чаплă статистик пулнă.

Петр Петрович Семенов-Тян-Шанский Рязань кĕпĕрнинче 1827 çулхи январĕн 14-мĕшĕнче çуралнă. Петербургри университетран вĕренсе тухнă хыççăн ăна Вырăссен географи обществин членне суйланă. П. П. Семенов, 1873 çулта çав обществăн вице-президенчĕ пулса тăрса, ăна хĕрĕх çул хушши ытла ертсе пынă. Вăл нумай пысăк экспедицисене хатĕрлес ĕçе хутшăннă. 1849 çулта ученăй Рязань, Тула, Воронеж кĕпĕрнисем тăрăх çӳрет. Кунта Семенов магистр диссертацине тытма питĕ нумай материал пухать.

Анчах ученăя Центральнăй Азири нихçан та Европăри çын ури ярса пусман ту хырçи—Тянь-Шань илĕртет. «Азие чи шала кĕни, çав никам çитеймен тусен юрлă тӳпине çитни,— тесе çырнă Семенов,— çав ту çинчен темиçе чул катăкĕ илсе килни, çĕршыв наука халиччен пĕлмен ӳсентăрансемпе чĕрчунсене пĕлни маншăн çав тери пысăк савăнăç пулнă».

Лайăх хатĕрленсе çитсе, вăл Тянь-Шань тăвĕсем çине экспедицие тухса кайнă. 1856 çулта Семенов Верный (халĕ Алма-Ата) хулине çитнĕ, унтан çав тери аслă тусен çĕршывне кĕрсе кайнă, ун чухнехи наука вăл тусем çинчен нимĕн те пĕлмен.

Тепĕр çулхине çулçӳревçĕ Тянь-Шанĕн çӳлĕ тăвĕсем çине хăпарнă, Вăтам Азири аслă юханшыв Сыр-Дарья пуçланнă тĕле (Нарын пуçламăшне) тата Хан-Тенгри массивĕ патне çитнĕ. Семенов хăюллă çул çӳрени вырăс ученăйĕсемпе çулçӳревçисене нумай экспедицисем тума май панă.

Семеновăн Тянь-Шаньри экспедицийĕ наукăна пысăк усă кӳнĕ. Вăл вăхăтра нумай ученăйсем нимĕç географĕ Гумбольдт Центральнăй Азипе Вăтам Азири тусем вулкансем ĕçленипе пулнă тенипе килĕшнĕ. Анчах П. П. Семенов Тянь-Шаньра нимĕнле вулкан та, вулкан тăвĕсене те тĕл пулман. Çапла вăл нимĕç ученăйĕн йăнăш теорине сирсе янă. Тянь-Шаньре шалта Семенов çав тери пысăк пăрлă вырăнсене курнă. Ку пысăк открыти пулнă, мĕншĕн тесен шăрăх Гоби, Такла-Макан тата Туран пушхирĕсем хупăрласа тăракан ту системинче никам та пăрлă вырăнсем пуласси çинчен шухăшлама пултарайман. Семенов çĕнĕрен тупнă сăртлă-туллă çĕршыври тăпрапа, ӳсентăрансемпе тата чĕрчунсемпе пурнăçра усă курмалли майсене кăтартса панă, ку вăл унăн çав тери паха ĕçĕ пулнă. Вăл географи, зоологи, ботаника енĕпе паха материалсем пухнă, ту системин геологилле, геоморфологилле тытăмне кăтартса панă.

Вăтам Азири ту системисене тĕпчесе вĕренес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн 1906 çулта Семенов хушамачĕ çумне Тян-Шанский ят хушмалла тунă.

Çак экспедици хыççăн Петр Петрович сахал пĕлекен облаçсене тĕпчес ĕçе ертсе пырас тĕлĕшпе активлă ĕçленĕ. Пржевальскин, Потанинăн, Миклуха-Маклайăн, Северцовăн тата вырăссен ытти паллă ученăйĕсен чаплă экспедицийĕсене Семенов-Тян-Шанский ертсе пынипе, унăн планĕсем тăрăх туса ирттернĕ.

Петр Петрович Семенов-Тян-Шанский иртнĕ ĕмĕрте географи енĕпе пысăк кĕнекесем çырнă. 1896 çулта унăн «Вырăссен Географи Обществи çур ĕмĕр хушшинче тунă ĕçсен историйĕ» ятлă виçĕ томлă кĕнеки тухнă. Вырăссен географи наукин историйĕ çинчен çырнă çак чаплă кĕнекере 1845 çултан пуçласа вырăссем çул çӳрени тата экспедицисем туни çинчен тĕплĕн каласа панă. Семенов ертсе пынипе «Российăн географилле-статистикăлла словарне» (пилĕк томлă словарь) тунă. XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Семенов хăйĕн ывăлĕпе В. П. Семеновпа тата В. И. Ламанский академикпа пĕрле «Россия. Пирĕн тăван çĕршывăн географине пĕтĕмĕшпе çырса пани» ятлă пилĕк томлă чаплă кĕнеке кăларнă.

Семенов-Тян-Шанский çĕр кĕнеке яхăн çырнă. Вăл Европăри Российăна 12 географиллĕ района пайлама сĕннĕ. Унăн Российăна районсем тăрăх пайламалли схемине хăй вăхăтĕнче пурте ырласа йышăннă.

П. П. Семенов-Тян-Шанский экономикăлла географипе статистикăра тунă ĕçсем те паллă вырăнта тăраççĕ. Вăл пуçарнипе 1870 çулта Петербургра Пĕтĕм Российăри пĕрремĕш статистика съезчĕ пулнă. Семенов-Тян-Шанский 1897 çулхи пĕтĕм Российăри пĕрремĕш халăх переписне ертсе пынă. Пултаруллă ученăйăн статистикăри ĕçĕсемпе, сăмахран, ялти çĕр общинни çинчен калакан материалсемпе, В. И. Ленин хăйĕн «Российăра капитализм аталанни» ятлă кĕнекине çырнă чухне усă курнă.

Петр Петровичăн наукăри ĕçĕсемпе обществăллă ĕçĕсенче пуринче те вăл хăйĕн тăван çĕршывне, хăйĕн халăхне юратни палăрса тăрать. Вăл вырăссен наука чĕлхин тасалăхĕшĕн кĕрешнĕ, нимĕçле терминсем вырăнне вырăс сăмахĕсемпе усă курнă: нагорье (ту çийĕ), плоскогорье (тӳремсăртлăх), котловина (путак) т. ыт. те.

П. П. Семенов-Тян-Шанский: географи—этем пĕлĕвĕн паха отраслĕ, хăйĕн тăван çĕршывне, унăн пуянлăхĕсене пĕлме тăрăшакан халăха кирлĕ наука пулса тăрать, тенĕ. Вăл çапла çырнă: «...кашни ученăй, вăл сивĕ чунлă космополит пулса юлас мар тет пулсан, вăл хăйĕн тăван çĕршывĕнчи çынсемпе пĕрле пурăнас тет пулсан, этемлĕх пĕлĕвĕсене маллалла ярассишĕн тăрăшнисĕр пуçне, çав пĕлӳсене халăха пама тăрăшмалла».

Хăйĕн юлашки çулĕсенче П. П. Семенов-Тян-Шанский наукăпа обществăллă организацисенче 73 организацире члента тăнă, Российăри Наукăсен Академийĕн, Российăри Художество Академийĕн, Российăри мĕнпур университетсен, Российăри географи обществин, темиçе статистика комитечĕн тата ют çĕршывсенчи географи обществисен пумайăшĕн хисеплĕ членĕ пулнă. П. П. Семенов-Тян-Шанский ячĕ тĕнче карттине кĕрсе юлнă. Шпицбергента, Аляскăра, Центральнăй Азире, Китай провинцинче Цинхайра, Тянь-Шаньре, Кавказра, Монголири Алтайра ун ятне панă тусем, ту хырçисем, ту тӳписем пур.

Вырăссен аслă географĕ хăйĕн тăван халăхĕ валли наукăра пысăк ĕçсем туса хăварнă. Вăл тăван çĕршыва тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе тунă чаплă ĕçсем пирĕн çĕршывăн географи наукин ылттăн фончĕ пулса тăраççĕ.

Э. МУРЗАЕВ,
Географи наукисен докторĕ,
Сталинла премие лауреачĕ.

Театр

„Çамрăк çын“

(Спектакль куракан çырăвĕ)

Вырăссен драма театрĕ Г. Мдиванипе А. Киров çырнă «Çамрăк çын» пьесăна лартса пачĕ. Пьеса совет патриочĕсен—партизансен Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи паттăрла ĕçне кăтартса парать. Кăçалхи сезонта Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи совет халăхĕн паттăрла кĕрешĕвне кăтартакан спектакль пулманччĕ-ха. Ку пьесăна лартса театр коллективĕ паха ĕç турĕ.

Пьесăра кăтартнă ĕç чугун çулĕн пĕр пысăк узелĕнче пулса иртет. Çамрăк çын—совет инженерĕ Горбачев, фронт урлă каçса, нимĕç фашисчĕсем оккупациленĕ станцăна, киле таврăнать. Унăн амăшне гестапо арестленĕ. Ăна çăлас тесе Горбачев, нимĕçсен коменданчĕ Бамлер патне пырса, хăйне ĕçе йышăнма ыйтать, вăл депо ĕçне йĕркелесе яма сăмах парать. Нимĕç фашисчĕсем ăна ĕненесшĕн мар. Пытарса хунă оборудованине тупса пама пулсан ăна ĕçе илме килĕшеççĕ. Анчах Горбачева депора ĕçлеме йывăр: ăна партизансем кураймаççĕ, темиçе хутчен те пăшалпа переççĕ. Тăшман агенчĕ—машинист Гуляев, хăйне партизан пек тытса, инженера партизансемпе пĕрлешме хĕтĕртет, çак сĕнӳпе килĕшмесен персе пăрахатăп, тесе хăратать. Гуляев провокатора инженер Горбачев нимĕç коменданчĕпе депо пуçлăхĕ умĕнче персе пăрахать. Ку ĕç нимĕçсене Горбачев «вĕсем майлине» кăтартса парать. Совет патриочĕсен куçĕ умĕнче Горбачев «предатель» пулни татах та ытларах çирĕпленет. Çавăнпа та машинистсем те, учительпе унăн хĕрĕ Валентина та Горбачев инженер çине сиввĕн пăхаççĕ. Анчах малашнехи ĕçсемпе Горбачев хăйне лайăх кăтартса парать, вăл Тăван çĕршывшăн кĕрешекен çынсене хăй тавра пухса, вĕсене кĕрешĕве хутшăнтарать.

Горбачев рольне Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Дуняк лайăх выляса пачĕ. Спектакле пуçласа вĕçне çитиччен хумханса пăхатăн. Вăл тăшмансене кураймипулма, Тăван çĕршывăн вăй-хăватне çирĕплетессишĕн хытă тăрăшма вĕрентет.

Çавăн пекех учитель хĕрĕ Валентина Бруяко рольне М. Каширская артистка питĕ ăста вылять. Валентинăпа Горбачев иккĕшĕ хăйсем партизансем пулса ĕçленине пĕр-пĕрне каласа панă вырăна спектакль курма пынă çынсем пысăк хаваслăхпа хапăл туса кăмăлласçĕ.

Гестапо пуçлăхĕ—капитан Риц рольне Козоровицкий артист ĕненмелле, тĕрĕс выляса пачĕ. Унăн киревсĕр ĕçĕсене пăхсан кирек камăн та курайманлăх çуралать. Мордковичпа Посконин артистсем совет çыннисен шухăш-кăмăлĕсемпе туйăмĕсене, совет патриочĕсем тăшмана чĕререн курайманнине питĕ лайăх кăтартса пачĕç.

Спектакльте çитменлĕхсем те палăрçĕ. Акă пĕр картина: станцăна совет самолечĕсем штурмлаççĕ, бомбăсем пăрахаççĕ. Анчах бомбăсем çурални нĕре те илтĕнмест. Çавăн пекех пăшал пепи те ĕненмелле мар.

Учитель рольне вылякан артист Б. Л. Савич тăшмансем умĕнче хăйне хăй питĕ йăпăлти çын пек тыткалать. Ку ĕнтĕ совет учителĕшĕн килĕшӳллех мар. Çавăн пекех буфетчица рольне вылякан артистка В. М. Гудкова хăйне хăй ытлашши прĕклĕн, киревсĕр тыткалани палăрать. Çак çитменлĕхсене спектакле лартакан режиссер В. С. Фотиев юлташ çитес спектакльсенче пĕтересси шанас килет.

П. КАРПОВ.

Диалектикăллă тата историллĕ материализма вĕренмелли кружок руководителĕсен семинарĕ

ВКП(б) Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ диалектикăллă тата историллĕ материализма вĕренекен кружок руководителĕсен пилĕк кунлăх семинарне ирттерчĕ.

Семинарта пулнисем философи ыйтăвĕсем тăрăх чылай лекцисем итлерĕç.

Лекцисене ВКП(б) Чăваш обкомĕн лекторĕсем, Чăваш педагогика институчĕн преподавателĕсем вуларĕç.

Лекцисем хыççăн «Диалектикăллă тата историллĕ материализм» тема тăрăх семинар пулчĕ.

Кружок руководителĕсем занятисене хатĕрленсе ирттермелли ыйтусемпе те тĕплĕ паллашрĕç.

Драмкружок валли пьесăсем

Юлашки çулсенче колхозсенчи, шкулсенчи, культура çуртĕсем çумĕнчи драмкружоксем валли чăвашла пьесăсем питĕ сахал кăларнă, çавăнпа та кружоксем репертуарсăр аптраççĕ. Писательсен союзне, Чăвашгосиздата, КОГИЗ'а куллен вуншар çырусем килеççĕ,—пур çĕртен те пьесăсем ярса пама ыйтаççĕ.

Драмкружоксене репертуар тĕлĕшпе пулăшас шутпа Чăваш совет писателĕсен союзĕ икĕ сборник хатĕрленĕ. Пĕр сборникне пĕр актлă пьесăсем, теприне—шкулсенчи драмкружоксем валли çырнă пьесăсем кĕртнĕ.

Иккĕмĕш сборник уйрăмах пысăк пулать. Унта чăваш писателĕсем çырнă тата вырăсларан куçарнă 14 пьеса кĕртнĕ. Тематика енчен вĕсем питех те нумай енлĕ, тĕрлĕ ыйтусемпе событисене сутатса параççĕ. Ачасем Отечественнăй вăрçа хутшăннине, вăрçă вăхăтĕнче тылра мĕнле ырми-канми ĕçленине кăтартакан пьесăсемпе пĕрлех, ачасен паянхи пурнăçне, вĕренӳне, вĕсем ялхуçалăхне вăйлатас ĕçе хутшăннине кăтартакан пьесăсем те пур.

Икĕ сборникне те пичетлеме панă, вĕсем çак çывăх вăхăтрах пичетленсе тухмалла. Драмкружоксенче ĕçлекенсем вăл кĕнекесене КОГИЗ магазинĕсенче, Союзпечать киоскĕсенче туянма тата «Книга—почтой» урлă çыrăнса илме пултараççĕ.

Музыкантсен çемйи

ИШЛЕЙ. Салапайкасси ялĕнче Степан Спиридонович Лебедев колхозник пурăнать. Вăл ултă ача пăхса ӳстернĕ. Степан Спиридонович пĕчĕкренех музыкăна юратнă, унпа интересленнĕ. Вăл кĕслепе тата купăспа ăста калать. Ашшĕне курса ывăлĕсем те музыкăна вĕреннĕ. Степан Спиридоновичăн аслă ывăлĕ—Петр Степанович хальхи вăхăтра Киев хулинче пурăнать, вăл—ăста аккордеонист. Иккĕмĕш ывăлĕ—Герман Степанович—чăвашсен паллă композиторĕ, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ. Александр Степанович—артист-музыкант пулнă, Аслă Отечественнăй вăрçăра пуçне хунă. Тăваттăмĕш ывăлĕ—Зиновий Степанович Совет Çарĕнчен таврăннă. Вăл та музыкăпа хытă интересленет, тĕрлĕ музыка инструменчĕсемпе нумай кĕвĕсем пĕлет. Валериан Степанович—Киеври консерваторире 3-мĕш курсра вĕренет.

— Манăн ывăлсем пурнăçăн аслă çулĕ çине тухрĕç. Совет влаçĕ вĕсене телейлĕ турĕ, савăнăç пачĕ. Эпĕ хамăн ывăлăмсемпе мухтанатăп, савăнатăп. Телейлĕ пурнăçшăн аслă Сталина чĕререн тав тăватăп,—тет пилĕк музыкант ашшĕ Степан Спиридонович.

С. БАРАНОВА.

Культурăллă пурнăç хроники

Çĕнĕ шкул. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хетакасси ял Советне кĕрекен Чĕрмĕш ялĕнче пуçламăш шкул валли çĕнĕ çурт туса пĕтерчĕç. Халĕ занятисем таса та çутă классенче иртеççĕ.

Литература кружокĕ. Куславкка районĕнчи Варасăрти çичĕ çул вĕренмелли шкулта чăваш литератури кружокĕ ĕçлет, ăна Е. Смирнова учительница ертсе пырать.

Юлашки занятисенче Çеçпĕл Мишшин «Сăвă çырассипе ударени правилисем» ятлă статьине пăхса тухнă, П. Хусанкайăн хăшпĕр произведенийĕсене сӳтсе явнă.

Кружок членĕсем «Хĕлхем» ятлă литература журналĕ кăларса тăраççĕ.

Паллă механик. Александр Нагаев Пăрачкав районĕнче 15 çул хушши ĕнтĕ киномеханик пулса ĕçлет. Вăл çичĕ ялта кино кăтартать. Ĕççыннисем ăна хисеплеççĕ, хăнана кĕтнĕ пек кĕтсе илеççĕ. Иртнĕ çулта вăл 250 сеанс ирттернĕ.

Шкулти лекторий. Красноармейски районĕнчи Янкасри çичĕ çул вĕренмелли шкулта лектори ĕçлет, вăл 16 учителе пĕрлештерсе тăрать. Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа учительсем колхозниксем валли агрономипе биологи, медицина, чĕлхепе литература тата искусство ыйтăвĕсем тăрăх вуншар лекципе доклад туса панă.

ООН Генеральнăй ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

Америкăн „коллективлă мерăсем“ текен программи çĕнĕ вăрçă хатĕрлемелли программа пулнине тăрă шыв çине кăларнă

Генеральнăй Ассамблейăн пĕрлехи ларăвĕ

ПАРИЖ, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). «Коллективлă мерăсем» текенскерсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитет докладĕ тăрăх 11 çĕршыв сĕннĕ резолюци проектне, Политика комитетĕнче йышăннăскере, январĕн 12-мĕшĕнче Генеральнăй Ассамблея пленумĕнче çирĕплетме тăратнă. Ку резолюци проектне США-па ытти 10 çĕршыв делегацийĕсем малтан Политика комитетне тăратнăччĕ, унта малтанхи проекта пысăк тӳрлетӳсем кĕртнĕччĕ, хальхи проект вара малтанхинчен нумай урăхларах. Чылай çĕршывсен представителĕсем Америкăн «коллективлă мерăсем» текен программи США хăйĕн авантюрăллă вăрçисене, Америкăн Корейăри хĕçпăшаллă интервенцийĕ пек вăрçăсене, ытти государствăсене хутшăнтарма хăтланни пулнине туйса илнĕ. Асăннă тĕллевсене пурнăçлама 11 çĕршыв резолюцийĕнче мирпе хĕрушсăрлăхшăн тĕп ответлăх тытакан Хăрушсăрлăх Совечĕ туma тивĕçлĕ ĕçсене Генеральнăй Ассамблейăна тата ытти органсене пама палăртнă. Унта решенисене пурте сасăлани йышăнмалли принцип сук, çавăнпа США çав органсенче сасăсен ытларахăшĕпе решени йышăнма май пуррипе усă курма шанать.

США политикине ялантах пĕр сăмахсăр хӳтĕлекен государствăсем те коллективлă мерăсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитет докладне ырлама килĕшмен. Вĕсем унта тӳрлетӳсем нумай кĕртнĕ. Çав тӳрлетӳсем вĕсене политикăпа экономика тĕлĕшĕнчи тата ытти сăлтавсене кăларса тăратнипе Америкăн «ООН йышăннă коллективлă мерăсем» текен агрессиллĕ ĕçĕсенĕ хутшăнассинчен пăрăнма май парĕç. Çав тӳрлетӳсене йышăнни тата вĕсене 11 çĕршыв резолюцийĕн проектне кĕртни Америка шутласа хуни пурнăçа кĕменнине пĕлтерНĕ. Çапах та, паллах ĕнтĕ, резолюцие темĕн чухлĕ тӳрлетнĕ хыççăн та, вăл çĕнĕ вăрçă хатĕрлемелли программа пулса тăрать. Чылай государствăсем çав программăна йышăнассине хирĕç пулнинчен халĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене сахалтарах хисеплеме пуçлани тата çав государствăсем США-на итлени чакни курăнать, çакă вара Пĕрлешӳллĕ Штатсене ООН ялавĕпе тата унăн ячĕпе тума хатĕрлекен агрессиллĕ ĕçсене пурнăçлама нумай чăрмантарать.

«Коллективлă мерăсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитет» докладĕнче çырса хунă çĕнĕ вăрçă пуçармалли программăна тата 11 çĕршыв резолюцине хирĕç Совет Союзĕн делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвĕсене тăратнă. Совет делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвĕсенче аслă державăсем каласса таталнă тăрăх мирлĕ пурнăçа çирĕплетес тата тĕнчери лару-тăрури йывăрлăхсене сирсе ярас шутпа тăратнă. Совет делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвĕнче: «коллективлă мерăсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитета» салатса ямалла», Хăрушсăрлăх Советне тĕнчери лару-тăрури хальхи йывăрлăхсене сирсе яма тата Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусене хăвăртрах ăнăçлă вĕçлеме пулăшмашкăн мерăсем йышăнма пĕр тăхтаса тăмасăр хăйĕн ларăвне пухма хушмалла, тесе каланă.

США делегацийĕ тата агрессиллĕ Атлантика блокĕнчи ытти çĕршывсен делегацийĕсем хĕснипе ку резолюцие, пăхса тухнă чухне нумай улăштарса, йышăннă. Нумай çĕршывсен делегацийĕсем «коллективлă мерăсем» текенскерсен комитечĕн докладне ырлама килĕшмен, ăна ырламан, çапах та вĕсем çав çулпа маллалла кайма хăйăман, вĕсем малта асăннă комитета салатса ярас тесе панă сĕнĕве йышăнман. Çавăн пекех вĕсем Политика комитетĕнче Америка тăратнă тӳрлетĕве йышăнса, Хăрушсăрлăх Совечĕн ларăвне пĕр тăхтаса тăмасăр пухма, унта Корейăри перемири тума пулăшасси çинчен сӳтсе явма сĕннипе те сирсе янă. Çапла вара, Совет делегацийĕн резолюцийĕнче тĕнчери лару-тăрури йывăрлăхсене сирсе яма мĕнле мерăсем йышăнасси çинчен сӳтсе явма Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулмалли ларăвĕсене ирттермелле, çав ларусене вĕсем «усă пама пултарнă чухне» пухмалла, тесе калакан сĕнӳ юлнă. Ку сĕнĕве йышăнассишĕн Политика комитетĕнче делегацисен пысăк пайĕ сасăланă, ăна та Генеральнăй Ассамблея пленумĕнче пăхса тухма тăратнă.

Пĕрлехи ларура Америкăна пур енчен те пăхăнса тăракан çĕршывсен представителĕсем мĕншĕн ку е тепĕр резолюцишĕн сасăланипе сасăламанни çинчен сăмах тухса каланă. Вĕсем Политика комитетĕнче Америкăн «коллективлă мерăсем» текен программине хирĕç тăракансем сахал пулнă пек кăтартма хăтланнă. Çапла, Бразили делегачĕ Муниз, «коллективлă мерăсем» тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн председателĕ пулнăскер, 11 çĕршыв резолюцийĕн проектне пăхса тухнă чухне вăйсăрлатни çинчен, тӳрлетӳсем кĕртнипе унăн шухăшне пăчĕклетни çинчен калама пăхнă.

Ку ыйтăва Политика комитетĕнче пăхса тухнă чухне США-на хисеплесси нумай чакнă пулсан, США представителĕ Коэн хальхинче США авторитетне сыхласа хăварма хăтланнă. Вăл 11 çĕршывăн улăштарнă проекчĕ те США «коллективлă мерăсем» йышăнас тĕлĕшпе тума шутланисене пурнăçлама май паракан «пысăк ĕç», тесе каланă.

ООН членĕнче тăракан çĕршывсен делегацийĕсене Коэн США сĕннĕ «коллективлă мерăсем» текенскерсене пурнăçлас ĕçе хутшăнма тепĕр хут чĕннĕ, вăл пурте хутшăннă ĕç пулса тăтăр, тенĕ.

Анчах США представителĕ чĕнсе каланипе килĕшменни çинчен нумай делегацисем, ку шутра 11 çĕршыв резолюцийĕн проектне йышăнассишĕн сасăланă делегацисем те, çавăнтах пĕлтернĕ.

Йемен делегачĕ 11 çĕршыв резолюцине ООН членĕсемшĕн «коллективлă мерăсем» текенскерсене пурнăçлама хутшăнасси обязательнăй мар текен пункта кĕртни çинчен, кун хыççăн çеç вăл çав резолюцие йышăнассишĕн сасăлама килĕшни çинчен каланă.

Мексика та çавăн пек ответ панă.

Сири представителĕ хăйĕн сăмахĕнче Сири делегацийĕ 11 çĕршыв резолюцийĕшĕн сасăланине çав резолюцири «коллективлă мерăсене» хутшăнма сăмах пани тесе шутламанни çинчен протокол çине çырма ыйтнă.

США чĕннине хирĕç Инди представителĕ татах та татăкларах ответленĕ, вăл Инди çав ĕçсене пурнăçланă çĕре хутшăнма килĕшмест, тенĕ.

Боливи представителĕ тухса каланине пурте хытă интересленсе итленĕ. Çав çĕршыв правительстви США мире тата халăхсен хăрушсăрлăхне хирĕç тăвакан политикăллă ĕçсенче яланах Америка лагерĕнчи ытти çĕршывсен правительствисемпе пĕрле пынине пурте пĕлеççĕ. Анчах çак правительство та 11 çĕршыв резолюцийĕн тĕп пункчĕсене ырлама май çук, тесе шутланă. Хăйĕн позицийĕ çинчен каласа, Боливи представителĕ: Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ умĕнче тĕнчене «хăшпĕр державăсем» пĕтĕм тĕнчипех пуç пулса тăма хăтланнинчен çăлса хăварас задача тăрать, тенĕ. Экономика тĕлĕшĕнчен вăйсăр, анчах халиччен усă курма тытăнман пуянлăхсем чылай пур государствăсене 11 çĕршыв резолюцийĕнче сĕнекен ĕçсене пурнăçланă çĕре хутшăнма хушни, çав вăхăтрах «пĕр аслă держава» çав çĕршывсене экономика енĕпе хĕснине хирĕç нимĕнле мера та йышăнмасăр тăни юрăхлă мар, тенĕ вăл.

Вунпĕр çĕршыв резолюцине йышăнассишĕн хытă тăракансем—Франци, Гаити тата Филиппин представителĕсем каланисем вара ниме пĕлтермен пуш сăмахсем пекех пулнă.

Америкăн «коллективлă мерăсем» текен программи мир ĕçне пĕтерсе лартма, хăрушлăх тума пултарнине СССР, Чехословаки, Польша, Украина ССР тата Белорус ССР делегачĕсем тĕплĕ кăтартса панă.

«Коллективлă мерăсем» текенскерсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитета салатса яманни мир ĕçне пысăк сиен кӳме пултарать, тенĕ Польша представителĕ. Çав «коллективлă мерăсем» текенскерсем США законсăр йĕркепе, ООН ячĕпе тата ялавĕпе витĕнсе çĕнĕ агресси тăвас ĕçе пурнăçлама хăтланни пулать, тенĕ вăл.

Вунпĕр çĕршыв резолюцийĕн тĕллевĕ Хăрушсăрлăх Совечĕн полномочийĕсене Генеральнăй Ассамблейăна парасси, çапла майпа Пĕрлешӳллĕ Штатсене авантюрăллă çĕнĕ вăрçăсем пуçарас ĕçре пулăшасси пулать, тенĕ Чехословаки делегачĕ.

Вунпĕр çĕршыв резолюцийĕн пĕтĕм шухăшĕ, малтан пуçласа вĕçне çитиччен, çĕнĕ вăрçă хатĕрленине тата ăна пуçарнине тĕрĕс ĕç пек кăтартма тăрăшнинче пулать, тенĕ Украина ССР делегацийĕн пуçлăхĕ Л. М. Барановский. СССР делегацийĕ Политика комитетне тăратнă сĕнĕве Украина ССР делегацийĕ пĕтĕмпех ырлать, тенĕ вăл.

Белорус ССР делегацийĕн пуçлăхĕ К. В. Киселев 11 çĕршыв резолюцийĕ ООН Уставне питĕ киревсĕррĕн пăсни пулнине палăртнă. Çав резолюцире сĕнекен «коллективлă мерăсем» текенскерсем чăнниех хăрушсăрлăха пĕрле хӳтĕлессипе нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмаççĕ. Вунпĕр çĕршыв резолюцийĕнче США-н Корейăри агрессине кăна мар, США малашне те ООН ялавĕпе витĕнсе ытти кирек хăш вырăнта та тăвакан агрессиллĕ ĕçсене законлă ĕçсем пек кăтартас тĕллев лартнă. Çавăнпа Белорусси делегацийĕ 11 çĕршыв резолюцине хирĕç сасăлать, тенĕ.

Унтан СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский кĕске сăмах тухса каланă. Вăл ку ыйтăва сӳтсе явнин итогне тунă. Хăйĕн сăмахне нумай тĕслĕхсемпе сăлтавсем илсе кăтартса çирĕплетнĕ.

А. Я. Вышинский сăмахĕ

— Çак ыйтăва Пĕрремĕш комитетра пăхса тухнă чухне, пурте пĕлеççĕ, Совет Союзĕн делегацийĕ 11 делегацин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хыççăн пыракан делегацисен, резолюци проектĕнчи сĕнӳсене хирĕç сасăларĕ. Пирĕн делегаци çакна асра тытрĕ: эпир, проектăн кашни пунктне тĕплĕ пăхса тухнă хыççăн, совет делегацийĕн аллинче пур нумай фактсемпе çирĕплетсе, тĕплĕ пĕлнĕ тăрăх, çав резолюци Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн Уставĕнче çырса хунă задачăсемпе, тĕллевсемпе тата принципсемпе килĕшсе тăмасть, пĕтĕмпех çавна хирĕçле тĕллевсем тытать.

Совет Союзĕн делегацийĕ çавăн пек резолюци майлă, мире хӳтĕленĕ пек туса, агрессие хирĕç тăнă пек туса, чăннипе вара çĕнĕ вăрçă хатĕрлеме пулăшмалли программа çинчен çырнă резолюци майлă, пулмарĕ, малашне те пулмасть.

Эпĕ çакна палăртмасăр иртме пултараймастăп: 11 делегаци резолюцийĕ, тӳрлетӳсем кĕртнĕ хыççăн, Генеральнăй Ассамблейăра пăхса тухма тăратнăскер, малтан çырса хатĕрлениинчен чылай уйрăммах.

«11 делегаци резолюци» проекчĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕнче члента тăракан государствăсене хăйсен суверенлăй прависене, вĕсем никама пăхăнмасăр пурăнакан государство пулнине хирĕç пыракан обязательствăсемпе çыхса хураснăн пулнă.

Чылай делегацисем резолюцин малтанхи проекчĕ, суя сăмахсемпе витсе, çавăн пек тума хăтланнине хирĕç тăчĕç, делегацисем хăйсем енчен тӳрлетӳсем пачĕç, çав тӳрлетӳсем, эпĕ калаттăм, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегацийĕ ертсе пынипе тата хĕснипе хатĕрленĕ «11 делегаци резолюци» проектĕнчи шухăша, унăн характерне тĕпренех улăштарчĕç.

Çав резолюцие Атлантика блокне кĕнĕ е Атлантика блокне пăхăнса тăракан çĕршывсемпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен агрессиллĕ планĕсене ăнăçларах пурнăçлас енĕпе усă курас тесе хатĕрленĕ пулнă,—ку вăл уççăнах курăнса тăрать. Çавă ытла куса курăнса тăнăран ĕнтĕ хăшпĕр делегацисем: Египет, Ирак, Иран, Йемен, Ливан, Саудовски Аравии, Сири, Афганистан делегацийĕсем резолюци проектне ятарласа çырнă пункт кĕртме сĕнчĕç, çав питĕ паха пункт «коллективлă мерăсем» текен йĕркене пĕтĕмпех ӳпĕнтерсе ярать. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем çав пункта васкаса «11 делегацин резолюцине» кĕртрĕç. Çав резолюцие сӳтсе явнă чухне Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем, хăраса ӳксе, пĕтĕм фронт тăрăх каялла чакрĕç,—США-н «коллективлă мерăсем» текен резолюци хăйсемшĕн мĕнле хăрушлăх туса хунине туйса илнĕ державăсем хĕснипе каялла чакмалла пулчĕ.

Нумай делегацисем Америка хатĕрленĕ «коллективлă мерăсем» текен проектри паллă пунктсене хирĕç тăчĕç. Кун пек пунктсен шутне, сăмахран, резолюци пункчĕн малтан çырса хатĕрленĕ 1-мĕш пункчĕ кĕрет, унта «коллективлă мерăсен» комитечĕн докладне «асра тытса тăма» йышăнасси çинчен çеç мар, комитет заключенине çирĕплетесси çинчен те каланă пулнă. Нумай делегацисем пĕр шухăшлă пулса çавна хирĕç тăчĕç. Ку вăл, ман шутпа, пăлхав туни пулчĕ, «чĕркуççи çинче тăрса тунă пăлхав» пулин те, Америкăри пĕрлешӳллĕ Штатсем хушнине хирĕç пăлхав туни пулчĕ. Кун хыççăн ĕнтĕ эпир резолюцире «коллективлă мерăсен» комитечĕн докладĕнчи заключение çирĕплетме» сĕннине курмастпăр. Ку вăл, паллах ĕнтĕ, пĕтĕм резолюци путланса ларнине пĕлтерет.

Анчах, чылай пысăк тӳрлетӳсем кĕртнĕ хыççăн та, çав проект, малтанхи пекех, юрăхсăр проект пулса тăрать. Иртнĕ çулта Генеральнăй Ассамблея «Мире усă кӳрекен пĕрлĕх» тесе суя ят панă резолюци йышăннăччĕ,—хальхи проект та çав резолюци палăртнă çулпах пырать, вăл мире сыхласа хăвармалли тата тĕреклетмелли, агресси пуласшне сирсе ямалли ĕçсен программи мар, çĕнĕ вăрçă хатĕрлемелли программа пулса тăрать.

Ку программа çĕнĕ вăрçă пуçламалли çулпа пырса тепĕр утăм туни пулать, агрессиллĕ Атлантика блокĕ çав çулпа пырать, вăл Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕпе усă курма, ăна çав блокăн интересĕсене пăхăнтарма тăрăшать.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕ Коэн господин кунта: çав мерăсенче агрессиллĕ тĕллев тытни çук, тесе каларĕ. Ун пек калани фактсене хирĕçле пулать, фактсем çавăн пек калание ӳпĕнтерсех яраççĕ. Коэн господин кунта: «коллективлă мерăсем» паха пулнине Совет Союзĕ ăнланса илессине тата вăл çак резолюци майлă пулассине шанса тăратăп, терĕ. Анчах Коэн господин çавăн пек калани Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсем пулса тăракан господинсем, общественноçа улталаса лăплантарма тăрăшса, ултавлă суя сăмахсем калама имене тăманнине çĕнĕрен кăтартса пани çеç пулать.

Совет Союзĕн делегацийĕ малтан пуçласах çав резолюци юрăхсăр тесе шутларĕ. Мĕнле те пулин уйрăм тӳрлетӳсем кĕртме май çук тесе шутласа, СССР делегацийĕ хăйĕн резолюци проектне тăратрĕ, унта Америкăн «коллективлă мерăсем» çинчен калакан резолюцийĕнче çырса хунисем агрессиллĕ тĕллевсем тытни çине, çавна май «коллективлă мерăсен» комитечĕ текенскер юрăхсăр ĕç туни çине, çав комитета салатса яма кирлине кăтартса пачĕ.

Эпир халĕ те, уйрăм резолюци йышăнма сĕнсе, çавăн пек сĕнӳ паратпăр, делегацисене çак резолюци майлă пулма ыйтатпăр.

Генеральнăй Ассамблея резолюци проекчĕн, Пĕрремĕш комитета тăратнă резолюци проекчĕн, иккĕмĕш пайĕ çинчен, халиччен те татса паман пысăк ыйтусене, вĕсен шутĕнче чи малтан Корея ыйтăвне пăхса тухма Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулмалли ларăвĕсене халех пухасси çинчен калакан пайне илес пулсан, совет делегацийĕ, тӳрлетӳсем кĕртни пирĕн çав резолюцие чылай пăсрĕ пулин те, çапах та ку резолюцишĕн сасăлама май пур тесе шутларĕ.

Юлашки 4-мĕш страницăра.

ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

Юлашки. Пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра.

Çав тӳрлетӳсем Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулмалли ларăвĕсене халех пухассине сирсе пăрахрĕç, çапла вара халиччен те татса паман ыйтусене, пуринчен малтан, Корейăри вăрçа чарасси çинчен тăракан пысăк ыйтăва татса парассине йывăрлатрĕç. Анчах Совет Союзĕ халиччен татса паман ыйтусене йĕркеллĕ татса парас тесе яланах çине тăрса тăрăшать. Эпир миршĕн тăрăшатпăр, тĕнчери лару-тăру йывăр пулнине пĕтерессишĕн тăратпăр, ку вăл пире асăннă тĕллевсене пурнăçлас ĕçре мĕнпур майсемпе усă курма хушать. Акă мĕншĕн СССР делегацийĕ, пирĕн резолюцие, унта тӳрлетӳсем кĕртнĕ хыççăн, чылай начарлатнă пулин те, Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пухмалли ларăвне пухасси çинчен калакан резолюцишĕн сасăлани кирлĕ, тесе шутларĕ.

Совет Союзĕ мир çулĕпе пырать, ытти мĕнпур çĕршывсене мир çулĕпе пыма чĕнет. Халĕ мир çулĕпе пырассине хирĕç тăракан çĕршывсене те пурнăç хăех çав çул çине кăларассине эпир шансах тăратпăр. СССР делегацийĕ малашне те пуринчен малтан Хăрушсăрлăх Совечĕ мире тĕреклетмелли, мĕнпур пысăк ыйтусене йĕркеллĕ татса памалли тата, пуринчен малтан, Корейăри вăрçа чарасси çинчен пыракан калаçусене ăнăçлăн вĕçлеме пулăшмалли мерăсене йышăнтăр тесе тăрăшĕ.

* * *

Делегатсем тухса каланă хыççăн 11 çĕршыв резолюцие сасăлама тăратнă. Ăна йышăннă, 51 делегаци резолюцишĕн сасăланă. 5 делегаци (СССР, Польша, Чехословаки, Белоруссси тата Украина) хирĕç сасăланă, виçĕ делегаци (Аргентина, Инди тата Индонези) нихăш майлă та сасăламан.

Унтан тĕнчери лару-тăру йывăрланнине сирмелли мерăсем йышăнма Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран-вăхăта пухмалли ларăвне пухасси çинчен калакан резолюцие сасăлама тăратнă. Ку резолюцие хирĕç сасăлакан пулман. Ăна 57 делегаци сасăланипе йышăннă. Аргентина делегачĕ, çавăн пекех гоминдановец нихăш майлă та сасăламан.

Политика комитетĕнче

Совет Союзĕн делегацийĕ Ассамблейăра пăхса тухма мирлĕ пурнăç тумалли пысăк программа тăратнă

А. Я. Вышинский сăмахĕ

ПАРИЖ, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Генеральнăй Ассамблейăн Политика Комитечĕ январĕн 12-мĕшĕнче кун йĕркинчи черетри пункта—Совет Союзĕн делегацийĕ «Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен» панă сĕнĕве пăхса тухма тытăннă.

СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский ку ыйтупа сăмах тухса каласси çинчен ĕнерех пурте пĕлнĕ, ун çинчен паян ирхине тухнă хаçатсем те пĕлтернĕ. Çавăнпа та Политика комитечĕн ларăвĕ пуçланиччене унта халăх тата журналистсем нумай пырса тулнă. Совет делегацийĕ мĕн каланипе тата унăн сĕнĕвĕсемпе халăх хытă интересленнинчен Францири общественноçăн тĕрлĕ сийĕсем мирлĕ пурнăç тума хытă ĕмĕтленни курăнать.

А. Я. Вышинский икĕ сехет каланă. Вăл калаçнине пурте питĕ тимлĕ итленĕ. Журналистсем час-часах залран тухса, совет делегацийĕн пуçлăхĕ тунă заявленири уйрăм вырăнсене телеграф с телефон тăрăх пĕлтерме кайнă.

Агрессиллĕ Атлантика блокне пĕрлешнĕ чылай çĕршывсенче васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлеме тăрăшни пĕтмелли пурнăç патне илсе пыни, тĕнчери лару-тăрăва йывăрлатни, çав çĕршывсенчи халăхсен анлă массисен пурнăçне пĕрмаях начарлатса пыни çинчен А. Я. Вышинский тĕплĕ каласа панă. СССР делегацийĕн пуçлăхĕ каланисене тата вăл панă сĕнӳсене, уйрăмах атомлă хĕçпăшала чарса лартас тата тĕнчери контроль тăвас пирки панă сĕнӳсене делегатсем тата зала пухăннă халăх питĕ хытă интересленсе итленĕ.

СССР делегацийĕн пуçлăхĕ Совет правительстви ячĕпе Политика комитетĕнче пăхса тухса, унтан Генеральнăй Ассамблейăра йышăнма çакăн пек резолюци проектне тăратнă:

«**Пĕрремĕшĕ:** Генеральнăй Ассамблея агрессиллĕ Атлантика блокне хутшăнни, çавăн пекех хăшпĕр государствăсем, чи малтан Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем, ют çĕршывсен территорийĕсенче çар, тинĕс-çар тата сывлăш-çар базисем туни Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн членĕ пулнипе килĕшӳллĕ мар, тесе пĕлтерет.

Иккĕмĕшĕ: Генеральнăй Ассамблея çапла тума кирлĕ тесе йышăнать:

А) Корейăри вăрçа хутшăннă çĕршывсен пĕр тăхтаса тăмасăр вăрçă вăрçма чарăнмалла, перемири тумалла тата хăйсен çарĕсене 10 кун хушшинче 38-мĕш параллель сывăхĕнчен илсе каймалла:

Б) ют çĕршывсен çарĕсене пурне те, çавăн пекех ют çĕршывсен добровольцĕсен чаçĕсене те, виçĕ уйăх хушшинче Корейăран илсе каймалла.

Виççĕмĕшĕ. Генеральнăй Ассамблея атомлă хĕçпăшалпа, агресси хĕçпăшалĕ тата халăхсене йышлă пĕтермелли хĕçпăшал пулса тăраканскерпе, усă курнине халăхсен совеçĕпе чысне хирĕçле тата Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн членĕнче тăнипе килĕшӳллĕ мар ĕç тесе шутлать, атомлă хĕçпăшала пĕтĕмпех чарса лартни тата çавна пурнăçласа пынине тĕрĕслеме тĕнчери контроль туни çинчен пĕлтерет, çавăнпа вара атомлă хĕçпăшала чарса лартмалла тата тĕнчери контроль туса тăмалла тунине пĕр вăхăтрах пурнăçласа пыма тытăнмаллине шута илет.

Генеральнăй Ассамблея хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие атомлă хĕçпăшала чарса лартасси, ăна туса хума чарасси, халиччен туса хатĕрленĕ атомлă бомбăсемпе мирлĕ ĕçре çеç усă курасси çинчен конвенци проекчĕ хатĕрлеме, ăна 1952 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне Хăрушсăрлăх Советĕнче пăхса тухма тăратма тата асăннă конвенцие пурнăçланине хытă тĕрĕслесе тăма тĕнчери контроль тума хушать.

Тăваттăмĕшĕ. Генеральнăй Ассамблея Хăрушсăрлăх Совечĕн яланхи членĕсене—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене, Великобритание, Францие, Китая, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне—хăйсен çав постановление йышăннă вăхăтра пулнă хĕçпăшалĕсемпе хĕçпăшаллă вăйĕсен виççĕмĕш пайне чакарма, ку ĕçе çак постановление йышăннă кунран пуçласа пĕр çулталăк хушшинче тума сĕнет.

Пиллĕкмĕшĕ. Генеральнăй Ассамблея халех, тем пулсан та Генеральнăй Ассамблея атомлă хĕçпăшала чарса лартасси тата пилĕк аслă державăн хĕçпăшалĕсемпе хĕçпăшаллă вăйĕсен виççĕмĕш пайне чакарасси çинчен постановлени йышăннă хыççăн пĕр уйăхран кая юлмасăр, пур государствăсене те хăйсен хĕçпăшалĕсемпе хĕçпăшаллă вăйĕсем çинчен официальнăй тата тулли сведенисем тăратма, çав шутра атомлă хĕçпăшал çинчен те, ют çĕршывсен территорийĕсенчи çар базисем çинчен те тулли сведенисем тăратма сĕнет. Çав сведенисенче Генеральнăй Ассамблея çӳлте асăннă постановление йышăннă вăхат тĕлне вĕсем мĕн чухлĕ пулнине кăтартмалла.

Улттăмĕшĕ. Генеральнăй Ассамблея Хăрушсăрлăх Совечĕ çумĕнче тĕнчери çĕршывсен контроль органне тума сĕнет, вăл атомлă хĕçпăшала чарса лартасси çинчен тата хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене чакарасси çинчен йышăннă решенисене пурнăçланине тĕрĕслесе тăмалла. вăл тата государствăсем хăйсен хĕçпăшалĕсемпе хĕçпăшаллă вăйĕсем çинчен тăратнă сведенисене тĕрĕслемелле.

Генеральнăй Ассамблея атомлă хĕçпăшала чарса лартасси тата хĕçпăшалсене чакарасси çинчен йышăннă решенисене пурнăçлассинче шанчăклă тивĕçлĕ система тăвас шутпа тĕнчери контроль органĕн яланлăха çирĕплетнĕ йĕрке тăрăх, государствăсен шалти ĕçĕсене хутшăнмасăр, тĕрĕслев ĕçĕсене пурнăçласа пыма право пулмалла.

Çиччĕмĕшĕ. Генеральнăй Ассамблея Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕнче члента тăракан тата хальхи вăхăтра Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕнче тăман пур государствăсен правительствисене те Пĕтĕм тĕнчери конференцире хĕçпăшаллă вăйсемпе хĕçпăшалсене чăннипех те нумай чакарасси çинчен, атомлă хĕçпăшала чарса лартас тата çавна пурнăçланине тĕрĕслесе тăма тĕнчери контроль тăвас тĕлĕшпе практикăра пурнăçламалли мерăсем çинчен пăхса тухма чĕнет.

Пĕтĕм тĕнчери çав конференцие чи сывăх вăхăтрах, тем пулсан та 1952 çулхи июлĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр пухма сĕнес.

Саккăрмĕшĕ. Генеральнăй Ассамблея Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене, Великобритание, Францие, Китая тата Совет Союзне мире сыхламалли килĕшӳ тума, çак хисеплĕ те парăхатарлă ĕçлеве пурнăçлама хăйсен вăйĕсене пĕрлештерме чĕнет.

Генеральнăй Ассамблея мире юратакан ытти государствăсене те мире сыхламалли килĕшӳ çумне пĕрлешме чĕнет».

Вышинский хăйĕн сăмахне вĕçленĕ хыççăн США делегачĕ Гросс тата Великобритани делегачĕ Ллойд сăмах тухса каланă.

Гросс хăйĕн сăмахĕнче вăл совет делегацийĕн сĕнĕвĕсене тĕплĕн вĕренсе çитме ĕлкĕреймен, çавăнпа та малтанлăха кăна асăрхаттарусем тума пултарни çинчен каланă. Çапах та вăл васкасах: ку сĕнӳсем Ассамблейăна тахçанах татса панă ыйтусем патне каялла илсе пыраççĕ, тенĕ. Гросс хăй «коллективлă мерăсем» текенскерсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитет доклачĕ тăрăх совет делегацийĕ тăратнă резолюци проектне сӳтсе явнă чухне мĕнле каланинчен тата вăл халĕ мĕнле каланинчен США Корея ыйтăвне Генеральнăй Ассамблейăра сӳтсе явасран хăрани курăнать. Çавăн çинчен сӳтсе явни халĕ Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусенче чăрмантарма пултарать, тенĕ Гросс. Çавăн пек калани тĕрĕс мар пулнине СССР делегацийĕ тата ытти чылай çĕршывсен делегацийĕсем кун йĕркинчи маларахри ыйтăва сӳтсе явнă чухнех тăрă шыв çине кăларнине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ.

Совет делегацийĕн сĕнĕвĕсем чăннипех те мирлĕ пурнăç тума, тĕнчери лару-тăрури хальхи йывăрлăхсене сирсе яма, халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пурăнмалли пурнăçа çирĕплетме пулăшаççĕ. Гросс вара совет делегацийĕн çак сĕнĕвĕсене сӳтсе явтарасшăн мар пулнине уççăнах систернĕ, асăннă сĕнӳсене хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлеме çĕнĕрен тăвакан комиссие памалла, тенĕ вăл.

Британи делегачĕ Ллойд кун çинчен уççăнах каласа панă. Вăл Генеральнăй Ассамблея çакăн пек ыйтăва сăмахран, атомлă хĕçпăшала чарса лартасси тата пилĕк аслă державăн хĕçпăшалĕсемпе хĕçпăшаллă вăйĕсене чакарасси çинчен сӳтсе явма «юрăхлă вырăн мар», тенĕ. Ллойд заявленийĕнче те, Гросс тухса каланинчи пекех, çапла вара, США-па Великобритани мĕнпур çĕршывсенчи халăхсене хытă хумхантаракан ыйтусем тăрăх Генеральнăй Асстамблейăра решенисем йышăнас ĕçре чăрмантарма тăрăшни уççăнах палăрнă.

Гросспа Ллойд хăйсен васкавлă заявленийĕсене тунипе США хушнисене туса тăракан çĕршывсен делегацисене вĕсен мĕн каламаллине кăтартса панă.

США-ра ĕççĕр юлнă çынсен йышĕ ӳсет

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). США-ра нумай предприятисенче çар хатĕрĕсем тума тытăннă, мирлĕ пурнăçра кирлĕ япаласем туса кăларма чĕртавар сахал пама пуçланă. Çавна май çĕршывра пур çĕрте те, ĕççĕр юлнисен йышĕ ӳссе пырать.

«Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: «Нью-Йорк штатĕнче ĕççĕр юлнисен шучĕ питĕ хăвăрт ӳсет, кăçалхи июль уйăхĕ тĕлне ĕççĕр юлнисен шучĕ çĕршыври ĕççĕр юлнă мĕнпур çынсен пĕтĕм йышĕн 25 проценчĕ таран пулма пултарать. Иртнĕ çулталăк вĕçленнĕ тĕле Нью-Йорк штатĕнче ĕççĕр юлнисем çĕршывра ĕçлекен мĕнпур рабочисемпе служащисен пĕтĕм йышĕн 10 проценчĕ чухлĕ пулнă.

Германи халăхĕ Шуман планне хирĕç протестлет

БЕРЛИН. январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Бонри парламент империалистсен Шуман планĕ текенскерне йышăннă. Çав плана хирĕç Германин мĕнпур пайĕсенче пурăнакан çынсем хытă протестлеççĕ.

Ĕнер Эссенра пĕтĕм Германири горняксен конференцийĕ пулнă. Конференци Шуман планне хирĕç протестлемелли демонстраци пекех пулса тăнă. Конференцие Германин икĕ пайĕнчен те делегатсемпе хăнасем—пĕтĕмпе пин çын ытла пухăннă. Конференци делегачĕсем—тĕрлĕ политикăллă партисенче тăракан çынсем. Вĕсем Хĕвеланăç Германири 500 пин горняк ячĕпе тата Демократиллĕ Германи Республикинчи 200 пин горняк ячĕпе сăмахсем тухса каланă. Конференци çĕршыва çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнине хирĕç, Шуман планне хирĕç, Германие çĕнĕрен мирлĕ майпа хăвăртрах пĕрлештерессишĕн мĕнпур ĕççыннисем пĕрле кĕрешмелли çинчен решени йышăннă.

Ганноверта Шуман планне хирĕç тата Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнине хирĕç протестлесе митинг ирттернĕ. Митинга 2 пин çын ытла пухăннă. Берлинра Демократиллĕ Германи Республикинчи хресченсемпе ученăйсен ялхуçалăхĕнчи ĕçсен опычĕпе пĕр-пĕрне паллаштармалли конференцийĕ пулнă. Конференци йышăннă резолюцире Бонри парламент Шуман планне йышăннине хирĕç хытă протестленĕ.

Де Латтр де Тассиньи генерал вилнĕ

ПАРИЖ, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Парижра Францин Индо Китайри çарĕсен командующийĕ де Латтр де Тассиньи генерал вилнĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтернĕ.

Январĕн 13-мĕшĕнче хĕвелтухăçĕнчи фронтăн уйрăм участокĕсенче çапăçусем пынă. Янгуран çурçĕртерехре Америка чаçĕсем Халăх çарĕн позицисем çине темиçе хутчен те хытă тапăнса атакăсем тунă, вĕсене сиен кӳрсе, каялла чакарнă.

Хĕвеланăçĕнчипе вăтаçĕрти фронтсенчи уйрăм вырăнсенче çапăçнă.

Халăх çарĕн чаçĕсем тăшманăн 2 эсминецне сиенленĕ, çав карапсем, ытти карапсемпе пĕрле, хĕвеланăçĕнчи сыран сывăхне пынă, унтан мирлĕ халăх çине тупăсемпе пенĕ пулнă.

Иран правительстви Англие панă нота

ТЕГЕРАН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çинче Иран ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Каземи январĕн 13-мĕшĕнче Англи посолне панă нота пичетленнĕ. Ку нотăра январĕн 21-мĕшĕ тĕлне Англин Иран территорийĕнчи консульствисене пурне те хупса лартмалла, тесе каланă.

Нотăра çапла каланă: Иран правительстви «акăлчан чиновникĕсем Иранăн шалти ĕçĕсене хутшăнмалли политика тытса пынине текех тӳссе тăма пултараймасть» тата «çĕршывăн аслă интересĕсене хӳтĕлес шутпа Англин Иранри пур консульствисене те хупса лартмалла тата çавна тума хăйĕн право пур тесе шутлать». Çак ĕçе мĕншĕн туни çинчен каласа, нотăра çаксене асăннă: пĕрремĕшĕ, Англи правительствин консульствисенчи чиновниксем Иранри тĕрлĕ вырăнсенче «хăйсене тивĕçлĕ консул обязанноçĕсене пурнăçласа пырассинчен иртсе каяççĕ, Иранăн шалти ĕçĕсене хутшăнаççĕ, çакă вăл çĕршывăн никама пăхăнманлăхне пăсни пулать; иккĕмĕшĕ, Индипе Пакистан государствисене туса хунăранпа вĕсем Иранра хăйсене кирлĕ вырăнсенче консулсем тытса тăма пултараççĕ. Кун хыççăн Иранра Англи подданнăйĕсен йышĕ чакрĕ, çавăнпа та халĕ ĕнтĕ Иранри нумай вырăнсенче Англи правительствин консульствисем пулни нимĕн тума та кирлĕ мар; виççĕмĕшĕ, Иран правительствипе Англи правительстви пĕрпĕрин консулсем урлă сыхăнса тăрасси пĕр-пĕринпе килĕштернĕ пĕр пек условисем тăрăх пурнăçланса пымалла. Англире Иран çыннисем нумай пурăнаççĕ пулин те, Иран правительствин Англи территорийĕнче пĕр консульство та çук, Англи правительствин те çавăн пекех Иран территорийĕнче хăйĕн консульствисене тытса усрахз нимĕнле сăлтав та çук, тенĕ.

Францири хĕрарăмсен союзĕн нациллĕ совечĕн сессийĕ

ПАРИЖ, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Монтер хулинче (Сена департаменчĕ) Францири хĕрарăмсен союзĕн нациллĕ совечĕн сессийĕ уçăлнă. Сессире Жанетта Вермерш, Франсуаза Леклерк, Маргарет Блок тата Францири хĕрарăмсен союзĕн ытти руководительницисемпе демократиллĕ организацисен представителĕсем пынă.

Франци ĕççыннисен çемйисене çар налогĕсенчен тата пурăнма кирлĕ япаласем хаклаланинчен хӳтĕлемелли, хĕçпăшалсăрланассишĕн тата миршĕн кĕрешмелли çинчен хĕрарăмсен союзĕн генеральнăй секретарĕ Клодина Шома доклад тунă. Вăл Францири хĕрарăмсене Францие Америка çарĕсем оккупациленине хирĕç, çĕнĕ вăрçă хатĕрленине хирĕç кĕрешес ĕçе вăйлатма чĕннĕ. Хăйĕн докладне вĕçлес умĕн Клодина Шома «Хĕрарăмсем, миршĕн, хамăрăн ачасемпе килйышсен телейĕшĕн, малалла!» тесе чĕннĕ.

Шома доклачĕ тăрăх пренисем пулнă.

ПАРИЖ. январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Францири хĕрарăмсен союзĕн нациллĕ совечĕн сессийĕ хупăннă. Нациллĕ совет кăçал Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне—мартăн 8-мĕшне—атомлă хĕçпăшала чарса лартассишĕн, васкасах хĕçпăшал хатĕрлеме чарассишĕн, ют çĕршывсен çарĕсене Франци территорийĕнчен илсе кайтарассишĕн тата Германие хĕçпăшалсăрлатассишĕн кĕрешме чĕпекен лозунгсемпе уявламалли çинчен решени йышăннă. Çав шутпа мартăн 8-мĕшĕпе 9-мĕшĕнче Парижра Францири хĕрарăмсен пысăк демонстрацине ирттерме палăртнă. Çĕршыври вуншар хуласенче халăх митингĕсене ирттереççĕ.

БЕЛЬГИРЕ ĔÇÇĔР ТĂРСА ЮЛНИСЕН ЙЫШĔ ӲСНĔ

БРЮССЕЛЬ. январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Бельгири хаçатсем ĕççĕр тăрса юлнă çынсен йышĕ татах ӳсни çинчен пĕлтереççĕ. Çĕршывра ĕççĕр тăрса юлнисен йышĕ халĕ 334 пин çынран иртет. Юлашки эрнере кăна 5 пин çын ытла ĕççĕр тăрса юлнă.

«Драпо руж» хаçат: халĕ Бельгире кашни 6 рабочиран пĕр çын ĕççĕр тăрса юлнă, тесе çырать.

Н. К. Сверчков ӳкернĕ картинăсен выставки

Шупашкарта, художество галлерейĕнче, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Никита Кузьмич Сверчков художник ӳкернĕ картинăсен выставки уçăлнă. Выставкăна Н. К. Сверчков юлташ çуралнăранпа 60 çул, вăл картинăсем тума пуçланăранпа 30 çул тултарнă ятпа йĕркеленĕ. Выставкăна уçнăранпа икĕ эрне иртрĕ. Курма хулари рабочисемпе служащисем, студентсемпе шкул ачисем нумай пынă. Вĕсем художникăн пысăк ăсталăхне палăртаççĕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă революциччен чăвашсем хушшинче художниксем пулман. Чăваш халăхĕн изобразительнăй искусстви совет влаçĕ çулĕсенче çуралнă. Чăвашсен вăтă художникĕсем — Н. К. Сверчковпа М. С. Спиридонов, изобразительнăй искусство ĕçне патша самани вăхăтĕнче вĕреннĕ пулсан та, вĕсен творчестви совет влаçĕ çулĕсенче кăна аталанма пултарнă.

Н. К. Сверчков художникăн произведенийĕсем хушшинче историллĕ темăсем тăрăх ӳкернĕ картинăсем нумайрах. Омскри картинăсен галлерейĕнче унăн «Революционер ссылкăра», «Юлашки единоличник» ятлă пысăк картинăсем пур.

Чăваш республикинчи картинăсен галлерейинче упранакан произведенисенчен пĕри вăл «Колхоза çĕрпе ĕмĕрлĕхе усă курма государство актне пани» ятлă картина. Ку картинăра художник Чăваш ялĕнчи хресченсен савăнăçлă пухăвне ăста кăтартса панă.

Акă тата тепĕр картина, унăн ячĕ—«Пирвайхи трактор», Ку картинăра художник ялта пирвайхи трактора хресченсем мĕнле кĕтсе илнине питĕ ĕненмелле кăтартса панă. Тĕрлĕ çын тĕрлĕрен хаклапă çак хыпара. Хресченсенчен нумайăшĕ трактора курнипе чĕререн савăннă, трактор колхоз пурнăçне тĕпрен улăштарассине ĕненнĕ, çав вăхăтрах теприсем иккĕленнĕ, виççĕмĕшсем кĕвĕçнĕ т. ыт. те. Çаксене художник питĕ уççăн палăртма пултарнă.

Сверчков художник чăваш халăхĕн авалхи пурнăçĕнче пулса иртнĕ ĕçсемпе интересленет. Акă, «А. С. Пушкин чăваш ялĕнче» картинăра эпир Пушкин пурăннă вăхăтри чăваш ялне куратпăр. Аслă вырăс халăхĕн чаплă поэчĕ ăнсăртран пĕр самантлăха чăваш ялне кĕрсе тухнине, ун чухнехи чăваш ялĕн сăн-сăпатне картинăра чăн-чăн пурнăçри пек тĕрĕс сăнласа панă.

Сверчков художник хăйĕн картинисенче пирĕн çĕршыв пурнăçĕнчи паллă тапхăрсене пысăк картинăсенче ӳкерсе хăварма тăрăшать. «Тĕрлемесри çапăçу», «Крепков комиссар» ятлă картинăсем граждăн вăрçи вăхăтĕнчи кĕрешĕве кăтартса параççĕ.

Отечественнăй Аслă вăрçă çулĕсенче художник «Чăваш комсомолĕ ячĕпе тăракан бронепоезд», «Днепр урлă каçни» картинăсем ӳкернĕ. «Хисеп хăми умĕнче» ятлă картина—вăрçă хыççăнхи строительство тапхăрне сăнлакан произведени.

Пурнăçран илнĕ сăнар, картина Сверчковăн творчествăллă ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнса тăрать. Тăван çĕршывăн илемлĕ кĕтесĕсене те художник ӳкерсе илмесĕр иртсе каймасть. Сверчков—ăста пейзажист. Унăн иртнĕ çулла ӳкернĕ «Вăрман хĕрри», «Вăрманти çул» ятлă картинăсем куракансене чĕререн хумхантараççĕ.

— Епле илемлĕ Чăваш çĕршывĕ! Вăрман—пирĕн иксĕлми пуянлăх. Юрат ăна, сыхла ăна, ытларах ĕрчет ăна!—тесе чĕнеççĕ çак картинăсем.

Художникăн творчествăллă пултарулăхĕ çултан-çул ӳссе пырать. Малтанхи хăшпĕр картинăсенче чылай çитменлĕхсем (ӳкерчĕксем таса та уççăн тухманни, тĕссем илемлех пулманни т. ыт. çитменлĕхсем) пулнă пулсан, хальхи картинăсенче эпир çак çитменлĕхсене курмастпăр. Асталăх тĕлĕшпе художник пысăк ӳсĕмсем тунă. Хальхи вăхăтри картинăсем, уйрăмах вăрман ӳкерчĕкĕсем, портретсемпе этюдсем Сверчков художник чăн-чăн пултаруллă живописец пулса тăни çинчен калаççĕ.

Уяв ячĕпе уçăлнă выставка художникăн творчествине пур енĕпе те тулли палăртаймасть. Вырăн çитмен пирки кунта чылай картинăсене кăтартман. «Иван Грозный», «Петр первый» тата ытти пысăк картинăсем выставкăра çук.

Сверчков вăтă художник, вăл 60 çула çитнĕ. Нумай çулсем хушши вăл тĕрлĕ издательствăсенче художник пулса ĕçленĕ, хаçатсемпе журналсенче унăн карикатурисемпе картинисем сахал мар тухнă. Искусство ĕçĕнче паллă çитĕнӳсем тунăшăн 1940 çулта Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Никита Кузьмич Сверчков юлташа Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ ятне панă.

Чылай çулсем хушши вăл Шупашкарти художество училищинче çамрăк художниксем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет, хăйĕн творчествăллă ĕçри пуян опытне çамрăк кадрсене парать.

Н. К. Сверчков художник творчествăллă ĕçре кунтан-кун ӳссе пырать. Творчествăллă ĕçри опычĕ унăн анлă та пуян. Пурнăçа вăл лайăх пĕлсе тăрать. Ĕçре унăн пысăк хавхалану пур, Çаксем ăна малашне те тата пысăкрах, идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра тăракан произведенисем çырма май парĕç.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Республикăри шахмат чемпионачĕ

Республикăри 17-мĕш шахмат чемпионачĕн саккăрмĕш вăййинче чемпионатра малта пыракан Сергиевский пĕрремĕш разрядри шахматист Смирновпа тĕл пулса вылярĕ. Кĕрешӳ Сергиевский çĕнтернипе вĕçленчĕ.

Здорный Федорова выляса ячĕ.

Соболев Илларионова, Никитин—Зиагалова, Егоров—Эллене, Сиротин—Персова, Чугунов Аляутдинова çĕнтерчĕç.

Сакăр вăйă хыççăн Сергиевский малта пырать. Унăн—7,5 очко. Чугунов, Егоров, Сиротин—6-шар очко, Смирновпа Никитин 5-шер очко пухнă.

Колхозсенчен пĕлтереççĕ

ОКТЯБРЬСКИ «Звезда» колхоз членĕсем çуракине большевикла хатĕрленеççĕ. Вĕсем калчасене апат пама 68 тонна минераллă удобренисем кӳрсе килнĕ. Ӳсентăраншăн сиенлĕ тăпрари йӳçĕке пĕтерме 87 тонна известь хатĕрленĕ.

Хирте, юр тытнă çĕрте, куллен 150—200 çын ĕçлет. Пĕтĕмпе 750 гектар çинче юр тытса хăварнă. Ялхуçалăх машинисене юсас. вăрлăх тасатса хатĕрлес ĕçсем те лайăх пыраççĕ.

А. ПОЛИКАРПОВ.

ИШЛЕЙ. Çак кунсенче Кипечкасси ял Советне кĕрекен 4 колхоз членĕсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пулчĕ. Пуху, пĕр шухăшлă пулса, тăватă колхоза пĕрлештерме йышăнса хăварчĕ.

Пĕрлешнĕ «Большевик» колхоз кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет.

Х. ЛИСИН.

Ответлă редактор заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

Шупашкарти тата республикăри кинотеатрсенче
А. Н. ОСТРОВСКИН
„ПРАВДА ХОРОШО,
А СЧАСТЬЕ ЛУЧШЕ“
ятлă комедине кăтартма пуçлаççĕ.
РОЛЬСЕНЕ ВЫЛЯКАН АРТИСТСЕМ:
Амос Панфилович Барабашев—РСФСР халăх артисчĕ Н. И. Рыжов; унăн амăшĕ, Мавра Тарасовна—СССР халăх артистки, Сталинла премин лауреачĕ Е. Д. Турчанинова; Поликсена, Барабашев хĕрĕ—артистка В. В. Новак; Фелицата, Поликсена няньки—СССР халăх артистки, Сталинла премин лауреачĕ В. Н. Рыжова; Никандр Мухояров—РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ А. В. Карцев; Глеб Меркулыч, садовник—РСФСР халăх артисчĕ А. И. Сашин-Никольский; Пелагея Григорьевна Зыбкина—артистка В. А. Баринова; Платон, унăн ывăлĕ—РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Д. С. Павлов; Сила Ерофеевич Грознов, отставкăри унтер-офицер—РСФСР тата Тутар АССР халăх артисчĕ, Сталинла премин лауреачĕ Ф. В. Григорьев.
Комедие лартаканĕ—РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. И. Никольский.
Художник—СССР халăх художникĕ. Сталинла премин лауреачĕ К. А. Юон.
Театрăн главнăй режиссерĕ—СССР халăх артисчĕ, Сталинла премин лауреачĕ К. А. Зубов.
Фильм режиссерĕ—РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ С. П. Алексеев
Фильма М. Горький ячĕпе тăракан киностуди туса хатĕрленĕ. 1951 çул.
ЭКРАНСЕМ ÇИНЕ ГЛАВКИНОПРОКАТĂН ЧĂВАШ КАНТУРĔ КĂЛАРАТЬ.
1952 ÇУЛ.

Шупашкар хулинче, Речной переулокри 9-мĕш çуртра 2-мĕш хваттерте пурăнакан Василий Павлович Матутин арăмĕнчен—Горький хулинче, Канавински районĕнчи, Гордеевски урамри 76-мĕш çуртра, 1-мĕш хваттерте пурăнакан Лариса Ивановна Ивановăран уйрăлма ĕç пуçарнă. Ку ĕç Шупашкăр хулинчи 2-мĕш участокри халăх судĕнче.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НГ 00310 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.